24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
5
ЮНКУН
29 (5744) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КЕСМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН САККĂРМĔШ СЕССИНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Саккăрмĕш Сессине кăçалхи февралĕн 25-мĕшĕнче Мускав хулинче пухас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 4-мĕш.

АГРОНОМСЕН ХИСЕПЛĔ ĔÇĔ

1941 çул — çĕрĕçĕн пĕтĕмĕшле культурине, пĕтĕм ĕçĕн тата руководствăн культурине çӳлĕ пусăма хăпартмалли çулталăк пулса тăмалла. Колхозлă производствăна ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсемпе пуянлатасси, наукăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе хĕпăшаллантарасси, машинăпа трактор паркĕн ĕçне лайăхлатасси, ĕç дисциплинине çирĕплетесси тата ĕç тухăçлăхне хăпартасси — партипе совет организацийĕн, çĕрĕç органĕсен кулленхи хисеплĕ ĕçĕсем пулса тăраççĕ. Çак ĕçсенче ялхуçалăх специалисчĕсен, уйрăмăнах агрономсен — социализмлă çĕрĕçĕн инженерĕсен ролĕ çав тери пысăк та пархатарлă.

Ялхуçалăх артелĕн хуçалăхĕ нумай енлĕ, вăл анлă та сложнăй производство. Тĕрлĕрен колхозсем пур. Вĕсен хуçалăхĕпе экономики пурин те пĕр пек мар. Пур колхозсене те пĕр пек виçепе виçме май килмест. Кашни колхозăн хăйне майлă уйрăмлăх пур. Çав уйрăмлăхсене пĕлсе тăрса, кашни уйрăм колхозрах çĕртен вăл мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илмелле. Апла пулсан, колхоз çĕрĕн пахалăхне, тухăçлăхне, çанталăк улшăнăвĕсене, колхозăн вырăнти условийĕсемпе уйрăмлăхĕсене тĕплĕн пĕлни кирлĕ. Çакна — районри колхозсен уйрăмлăхĕсене тата вĕсен вăй-хăвачĕпе экономикине чи малтан унта ĕçлекен агрономсем пĕлсе тăмасан, урăх камсен пĕлмелле-ха?

Колхозсене хутран-ситрен, ăнсăртран тата йăнăртлăха кăна кĕрсе тухнипе халĕ колхоз производствине тĕплĕн пĕлсе ертсе пыма май çук. Ертсе пырасси вăл кулленех тата тăтăшах пулса пымалла.

Çĕрĕçне тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесс ĕçе наука никĕсĕ çинче хăвăрт аталантарса пыма пулăшакан вăя ял кучухнехи пек çивĕччĕн нихăçан та ыйтман. Колхозниксем наукăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе интереслеççĕ, çав çитĕнӳсене хăйсен уйхирĕсенче курасшăн. Çĕрĕç наукин çĕнĕ шухăшĕсене, çĕнĕ опытсене колхозниксен хушшинче сарса пырасси — никамран ытларах агрономăн ĕçĕ.

Агроном, зоотехник, ветеринари врачĕ, механизатор — ялти хисеплĕ çынсем. Колхозниксемпе колхозницăсем вĕсене яланах хăйсем патĕнче, колхоз производствинче курасшăн, вĕсенчен кулленех ĕçре пулăшу ыйтаççĕ. Колхозлă ялта агроном пысăк вăй пулса тăратъ. Унăн колхоз производствин чăн-чăн организаторĕ тата руководителĕ пулса тăмалла. Агроном сăмахĕ— авторитетлă сăмах, унăн сĕнĕвĕ —пĕр иккĕленсе тăмасăр пурнăçа кĕртмелли сĕнӳ.

Пирĕн республикăра колхозниксем хушшинче пысăк авторитетлă агрономсем сахал мар. Вĕсем колхоз пурнăçĕпе тачă çыхăну тытса ĕçлесе хăйсен опытне, квалификацине ӳстерсе пыраççĕ. Уйрăмăнах Сталин ячĕпе тăракан колхозри агроном Г. А. Мартынов юлташăн ĕçне кăтартса пама кирлĕ. Чылай вăхăт хушши Чăваш АССР Çĕрĕç Хăлăх Комиссариачĕн главнăй агрономĕ пулнăскер, халĕ вăл колхоз производствине хăпартас тĕлĕшпе хăйĕн пĕтĕм пултарулăхĕпе ĕçлет, вăл ялан колхозниксем хушшинче: колхозниксем ăçта — вăл та унта.

Г. А. Мартынов юлташ колхозниксен агрономиллĕ пĕлĕвне ӳстерессишĕн пĕтĕм хастарлăхпа ĕçлет. Вăл малта пыракан агротехникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене пурнăçа хăюллăн кĕртсе пыратъ, тĕрлĕрен çĕнĕрен те çĕнĕ опытсем тăвать, пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешес çĕрте вăл паллă новатор пулса тăратъ.

Иккассинчи «1-ое Мая» колхозри сортлă вăрлăх участокĕнчи агроном С. Г. Григорьев юлташ та хăйĕн пархатарлă ĕçĕсемпе çавăн пекех паллă агроном пулса тăратъ. Вăл, агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырса, сортоучастокра пысăк çитĕнӳсем тунă. Вăрлăхсен сортне производствăра сăнаса тĕрĕсленĕ чухне пăрахăçлани пулман Вăл Кӳкеçри урпа сортне упраса усранă. Халĕ çав урпа сортне Совет Союзĕнчи урпа акса тăвакан ытти облаççенче те производствăра тĕрĕслеççĕ. Çак урпа пысăк тухăçлă. С. Г. Григорьев юлташ — кăçалхипе виççĕмĕш çул ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ. Иртнĕ çулта ăна Главвыставком Пĕчĕк кĕмĕл медаль парса наградăланă.

Ялхуçалăхĕнчи кулленхи ĕç çакна кăтартса парать: агрономсем ертсе пынипе агротехника кăтартăвĕсене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пынă çĕрте тырпул тухăçĕ икĕ тĕслĕ. Иртнĕ çулта «1-ое Мая» колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 13,2 центнер тĕттырă туса илнĕ пулсан, сортоучастокра — 22,1 центнер туса илнĕ. Уйрăм сортсем тăрăх çакăн пек тухăç пулнă: ыраш — 30 центнер, кĕрхи тулă—38, сĕлĕ—39 центнер.

Анчах çакна калас пулать: чылай агрономсем колхоз производствинчен питех те инçетре тăраççĕ. Çĕрĕç органĕсен аппарачĕсенче ытларах ларма кăмăллакан агрономсем те сахал мар. Тĕрлĕрен сводкăсемпе циркулярсем çырса лараççĕ, кабинетсенчен тухмаççĕ. Вĕсем колхозсенче сайра-хутра пулакан хăнасем кăна. Агрономсенчен чылайăшĕ районри колхозсен пурнăçĕпе ĕçĕсене пĕлмеççĕ, колхозсене ĕçре тивĕçлипе пулăшса пымаççĕ.

Нумай чухне агрономăн ĕç куневак-тĕнек ĕçсем тунипех иртсе каять. Акă тĕслĕх. Йĕпреç райçĕрĕç пайĕнчи пĕр агрономăн январĕн 28-мĕшĕнче ĕç кунĕ çапла иртнĕ: ирхине, ĕçе пырсан, ăна иртнĕ çулти ăмăрту договорне шыраса тупма хушнă. Ăна тупнă-тупманах çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине кăтартакан сводка тума тытăннă. Çавăнтах райсовет исполкомĕнчен 1939—40 çулсенчи выставкăн участникĕсен списокне çырса илмесĕннĕ. Унтан вара резолюци проектне çыртарнă, кайран каллех тăваткăл метр пысăкĕш хут çинчи йышлă графасене колхозсенчен телефон тăрăх пухнă сведенисемпе тултарнă. Çавăнпа вĕсленнĕ унăн ĕç кунĕ. Паллах ĕнтĕ, агроном хăйне хушнă çак ĕçсене пĕрне те вĕçне çитиех туса çитерме пултарайман. Ку агроном темиçе уйăх хушши колхозсенче пулаймаланинчен пĕрре те тĕлĕнмелли çук.

Пит те шел, анчах факт: нумай агрономсен ĕç кунĕ çавăн евĕрлĕ иртет. Куншăн агрономсем хăйсем çеç мар, çĕрĕç органĕсем те, парти тата совет организацисем те айăплă. Вĕсем агрономсен ĕçне тĕрĕс организацилеме, вĕсен ĕçне тивĕçлипе хаклама хăнăхса çитмен-ха. Агрономсем колхозсене çуран утса çӳрени — вăл факт вĕт! Каллех Йĕпреç райçĕрĕç пайĕнех илер. Унăн тухса çӳреме лаша пур, анчах çак лашаña райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ хăй кăна ларса çӳрет, ытти работниксене памасть.

Агрономăн вырăнĕ — колхозра. Паян ун умĕнче тăракан задача — колхозсене çуракине большевикла хатĕрленме пулăшасси пулать. Чи паха та таса вăрлăх хатĕрлес, трактореемне ытти машинăсене тĕплĕн юсас, выставка участникĕсен опычĕсене пурнăçа кĕртес, колхозниксене стахановла ĕçĕн искусствине вĕрентес, уйхирсене вырăнти удобренисем ытларах кăларас, минерал удобренисем кӳрсе килес — çаксем агрономсен умĕнче тăракан задачăсем.

Çураки вăхăчĕ çывхарса килет. Пирĕн республика ăна большевикла кĕтсе илме çителĕксĕр хатĕрленет-ха. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн V Пленумĕ паян тумалли ĕçсене тĕплĕн кăтартса пачĕ. Пленум решенийĕсене пурнăçа ăнăçлăн кĕртессишĕн, мĕнпур колхозсене çуракине кăтартуллăн хатĕрлесе çитерессишĕн кĕрешесси — агрономсен чыслă та хисеплĕ ĕçĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Климент Ефремович Ворошилов юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Большевикла партипе Совет государстви строительствин ĕçĕнче, Хĕрлĕ Çара организацилес тата çирĕплетес ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн Климент Ефремович **Ворошилов** юлташа вăл çуралнăранпа утмăл çул тултарнă кун **Ленин орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар Генеральнăй Штабĕн Академине К. Е. Ворошилов юлташ ятне парасси çинчен

Климент Ефремович **Ворошилов** юлташ утмăл çул тултарнине паллă туса, Хĕрлĕ Çар Генеральнăй Штабĕн Академине **К. Е. Ворошилов** юлташ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатне уйăрасси çинчен

СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатне уйăрса икĕ Халăх Комиссариачĕ тăвас:

1) СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ.
2) СССР Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссариачĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль
1941 çулти февралĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Л. П. Берия юлташа СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Лаврентий Павлович **Берия** юлташа СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне Л. П. Берия юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне Лаврентий Павлович **Берия** юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

В. Н. Меркулов юлташа СССР Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Всеволод Николаевич **Меркулов** юлташа СССР Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 3-мĕш.

—— ☆ ★ ☆ ——

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕ, Эсир утмăл çул тултарнă кун, Сирэ — Ленинпа Сталинăн мухтавлă соратникне, Совет Союзĕн Маршалне—комсомолла хĕрӳллĕ салам ярать.

Ленинпа тата Сталинпа пĕрле Эсир, Климент Ефремович, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн пирвайхи организаторĕсенчен пĕри пулнă Сирĕн талант — большевик полководецăн таланчĕ — Хĕрлĕ Çарăн кĕрешӳри чапĕпе хăватне туптаса ӳстерсе пычĕ. Хĕрлĕ Çар халăхăн интересĕсене, социализмлă государствăн интересĕсене тăшмансен тапăнăвĕнчен сыхласа тăма пултаракан хăватлă вăй пулса тăчĕ пулсан, çакна нумай енчен Сире пула тунă.

Сирĕн пурнăç çулĕ — партиллĕ руководителĕн, государство деятелĕн, нимĕнрен хăраман полководецăн пурнăç çулĕ — совет çамрăкĕсене кĕрешӳпе çĕнтерӳ искусствине, ĕçри большевикла стиле, юратса ĕçлеме, совет халăхне, пурне те çĕнтерсе пыракан Ленин — Сталин партине пĕтĕм чĕререн юратма тата ăна пĕтĕм кăмăлтан парăнса тăма вĕрентет.

Сире, хаклă Климент Ефремович, тата нумай, нумай çулсем хушши пурăнса, Совет Союзĕнчи халăхсен ырлăхĕпе телейĕшĕн ĕçлесе пыма ырă сунатпăр.

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕ.

Ворошилов юлташ патне янă салам

Коммунистла Интернационалăн Исполнительный Комитетĕнчен

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

Эсир утмăл çул тултарнă кун Сирĕн пата, тимĕр пек çирĕп, юратнă ленинец, аслă Сталинăн шанчăклă ученикĕ, тусĕ тата соратникĕ патне хамăрăн çулăмлă, большевикла салама яратпăр.

Сирĕн пурнăçу тата Сирĕн пĕтĕм ĕçӳ — рабочи класс хушшинчен, халăх хушшинчен тухнă, çамрăк чухнехи çулсенчен тытăнсах хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне, хăйĕн большевикла пĕтĕм энергийĕпе хастарлăхне ĕççынисене ирĕке кăларас таса ĕçе панă, пĕр пăркаланми çирĕп пролетариллĕ революционер пурнăçĕпе кĕрешĕвĕн примерĕ пулса тăрать. Класлă хаяр кĕрешӳ çулне утса тухса, Луганскри рабочисене организацилесе, вĕсене вĕрентсе тата вĕсенчен вĕренсе, Эсир вырăссен пĕрремĕш революцийĕ пуличченех Ленинăн — Сталинăн мухтавлă партийĕн малти речĕсене тăнă.

Çавăнтан пуçласа, питех те тĕплĕн пытанса ĕçлесе, Украинăра тата Бакура, партин Стокгольмри тата Лондони съезчĕсенче, тĕрмери йывăр условисенче, Архангельскпа Чердынск ссылкисенче, февральри революцине Октябрьти Социализмлă Аслă революци кӳнĕсенче, граждан вăрçин фрончĕсенче тата Хĕрлĕ Çара ертсе пынă çĕрте, яланах тата Сире парти ăçта лартнă çавăнта пур çĕрте те Эсир большевиксен ялавне, Марксăн — Энгельсăн — Ленинăн — Сталинăн никам çĕнтерейми ялавне çирĕп тытса пынă.

Çак ялава алăра тытса пырса, Эсир 1917 çулта Измайловски гвардейски полка самодержавине хирĕç çапăçăва илсе тухнă, çак ялав айĕнче Октябрьти историллĕ кунсенче Эсир социализмлă аслă тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ.

Советлă çамрăк республика çине тăшмансем килсе тапăнсан, Эсир Донбасри рабочисене пухнă, противник персе тăнă çĕрте хĕçпăшаллă отрядсем, вĕсенчен Хĕрлĕ Çарăн пирвайхи отрячĕсене туса çитĕнтерсе пынă, вĕсене Российăри белогвардейщинăпа ютçĕршывсен интервенчĕсен войскисене хирĕç çапăçăва илсе тухнă.

Сирĕн çине аслă телей ӳкнĕ, Эсир Царицына паттăрăн хӳтлес, Украина çĕрне килсе тапаннă тăшманран тасатас ĕçре Сталин юлташăн чи çывăх тусĕ тата соратникĕ пулнă. Сталин шутласа хунипе туса йĕркеленĕ легендарлă Пĕрремĕш Утлă Çара ертсе пырса, Эсир вăл Деникинăн, Врангельăн тата Польша панĕсен бандисене çĕнтерсе пынă пĕтĕм мухтавлă çулпа утса тухнă.

Чаплă та пысăк полководеца, асран кайми М. В. Фрунзене вилĕм пирĕн ретсенчен туртса илсен, парти, Сирĕн питех те пысăк пултарулăхсене тата Хĕрлĕ Çар строительствинче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине шута илсе, Фрунзе вырăнне тăма тивĕçлĕ çынна — Сире суйласа илнĕ. 15 çула яхăнах Оборона Халăх Комиссарĕ пулса Хĕрлĕ Çара ертсе пырса, Эсир унăн хăватне кунран кунах çирĕплетсе, ăна çĕнĕ техникăпа пуянлатса пытăр, командирсен большевикла кадрĕсене туптаса çирĕплетрĕр, Хĕрлĕ Çара социализмлă тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнин, пĕтĕм чĕререн патриотизмăн туйăмĕпе воспитани парса пытăр.

Империализмлă иккĕмĕш вăрçă вучĕ явăнакан йывăр обстановкăра, тĕрлĕрен кĕтмен ĕçсем кăларса тăратма пултаракан обстановкăра, Эсир халĕ те, Оборона Комитечĕн Председателĕ пулса Сталин юлташăн генераллĕ идейисене пурнăçа кĕртсе пырса, социализмлă аслă держава оборонин хăватне пур енчен те вăйлатса тата çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеттĕр.

Эсир тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн туса пыракан питех те пысăк ĕçшĕн Хĕрлĕ Çарпа Совет халăхĕ Сире тĕрĕссипех ĕнтĕ юратаççĕ. Сире — рабочи класăн чăн-чăн ывăлне, хурçа пек çирĕп большевика, Пĕтĕм Союзри Коммунистла Партин Центральный Комитечĕн Политбюро членне — ССР Союзĕнчи ĕçсыннисем кăна мар, унăн чиккисен леш енчи инçетри ĕççыннисем те лайăх пĕлеççĕ тата юратаççĕ.

Сире, хаклă Климент Ефремович, Совет халăхĕпе мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисен телейĕшĕн нумай çулсем хушши пурăнма, малашне те тухăçлăн ĕçлесе пыма сунатпăр.

Сывă пултăр социализм çĕршывĕн оборона хăватне çирĕплетес ĕçре Сталин юлташăн ĕçпе кĕрешӳре тĕрĕсленнĕ соратникĕ, Климент Ефремович Ворошилов!

Сывă пултăр ĕççыннисен çулпуçĕ, тусĕ тата учителĕ Сталин юлташ!

ДИМИТРОВ
МАНУИЛЬСКИЙ
ХОЗЕ ДИАС
ЭРКОЛИ
МАРТИ
ПИК
ДОЛОРЕС ИБАРРУРИ
ГОТВАЛЬД
ФЛОРИН

1941 çулти февралĕн 4-мĕш.

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

Эсир утмăл çул тултарнă кун Сире, большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлне, ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариачĕ хĕрӳллĕ салам ярать!

Патша самодержавийĕ вăхăтĕнче, Эсир большевикла вăрттăнлăхра ĕçлесе, ссылкăсенче тата каторгăсенче пулса йывăр çула утса тухнă. Ленин тата Сталин ертсе пынипе Эсир Октябрьти Социализмлă аслă революци çĕнтерĕвĕшĕн царизма хирĕç, буржуаллă-помещикле пусмăра хирĕç хăватлăн кĕрешсе пытăр.

Пирĕн мухтавлă большевикла парти ертсе пынипе Эсир Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен организацийĕпе строительстви тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттертĕр. Хĕрлĕ Çарăн кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕсен мухтавлă страницисем нумайĕшĕ Сирĕн ятăрпала çыхăнса тăраççĕ.

V-мĕш Украински Хĕрлĕ Çар Дон урлă советлă Царицын патне Эсир ертсе пынипе тунă юмахри пек поход совет халăхĕ нихăçан та манас çук. Парти: вилмелле пулсан та хулана парас мар, тесе хушнине пурнăçа кĕртсе, Эсир, Сталин юлташ ертсе пынипе, Царицына никам илейми крепость туса хутăр, Краснов, Мамонтов генералсен тата ыттисен шургвардилле бандисене арканса тăкрăр.

Сталин юлташ пуçарнипе туса хунă Пĕрремĕш Утлă Çарăн Реввоенсовет членĕ тата политикăллă руководителĕ пулнă чухне, Эсир, хăвăрăн боевой соратниксемпе — конноармеецсемпе пĕрле, Деникин, Шкуро, Чесноков тата Врангель генералсене арканса тăкрăр, Çурçĕр Кавказран Украинăна пин километрлă историллĕ поход турăр тата пансен Польшин войскисене çĕмĕрмеллех çапрăр.

Ленин хушнине пурнăçа кĕртсе, Эсир, партин Х-мĕш съезчĕн делегачĕсемпе пĕрле, Кронштадтри пăлхава чи кĕске вăхăтра тĕп туса хутăр.

Сталинла пĕрремĕш тата иккĕмĕш пятилеткăсен çулĕсенче, хамăрăн мухтавлă большевикла парти ертсе пынипе, Эсир Хĕрлĕ Çара техника тĕлĕшĕнчен реконструкцилес енĕпе сахал мар ĕçлерĕр. Вăл, техника тĕлĕшĕнчен кая юлнă çар пулнăскар, хальхи вăхăтра кирлĕ пек çар, малта тăракан техникăпа хĕпăшалланнă çар пулса тăчĕ.

Сире саламланипе Оборона Халăх Комиссариачĕ çарăн чаплă организаторне кăна мар, тата государствăн чи пысăк деятелĕсенчен пĕрине саламлать тата Сире, хаклă Климент Ефремович, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Оборона Комитечĕн Председателĕ вырăнĕнче малашне те гухăçлă ĕçлесе пыма ырă сунать.

Тата нумай, нумай çулсем хушши пурăнса, хамăрăн аслă тăван çĕршывăн ырлăхĕпе телейĕшĕн ĕçлесе пырăр!

ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариачĕ.

ХАКЛĂ КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

Эсир утмăл çул тултарнă кун Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ Сирĕн пата, партипе рабочи класăн шанчăклă ывăлĕ, Совет Союзĕн мухтавлă маршалĕ, аслă учителĕн тата çулпуçĕн **Сталин** юлташăн çывăх соратникĕ патне — çулăмлă, большевикла салам ярать!

Царизм вăхăтĕнче питех те тĕплĕн пытанса ĕçленĕ чухнехи Сирĕн кĕрешӳ тата парти организацисене ертсе пыни, граждан вăрçин çулĕсенчи геройла чаплă ĕçсем, социализм çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен строительствинче нумай çулсем хушши ĕçлени,— çаксем вĕсем пирĕн çĕршыври рабочи класпа ĕççыннисен Ленинăн — Сталинăн аслă ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пынă кĕрешĕвĕн аслă летописĕнчи çутă страницăсем пулса тăраççĕ.

Сирĕн — большевикăн чаплă çулĕрĕ — пролетарий-металлистран пуçласа Партипе Совет Правительствин руководителĕ таран утса тухнă çулĕр — рабочи класăн, мухтавлă большевикла партин ĕçне пĕтĕм чĕререн тăрăшса туса пынин примерĕ пулса тăрать.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ Сире хамăрăн юратнă социализмлă тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн нумай, нумай çулсем хушши сывлăхлă пулса пурăнма, тухăçлăн ĕçлесе пыма пĕтĕм чĕререн сунать.

Сывă пултăр Совет Союзĕн мухтавлă маршалĕ, партипе рабочи класăн шанчăклă ывăлĕ, аслă Сталинăн çывăхран тата сывăх соратникĕ — Климент Ефремович **Ворошилов**!

Сывă пултăр мĕнпур ĕççыннисен аслă çулпуçĕ тата учителĕ **Сталин** юлташ!

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ.

К. Е. Ворошилов юлташ ячĕпе стипендисем памалла тăвасси çинчен

Климент Ефремович Ворошилов юлташ 60 çул тултарнине паллă туса, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ аслă учебнăй заведенисенче питех те лайăх вĕренекенсем валли Ворошилов юлташ ячĕпе стипендисем памалла тума йышăннă:

Фрунзе ячĕпе тăракан Çар Академийĕнче вунă стипенди, кашни стипендийĕ уйăхра 900-шер тенкĕ.

Хĕрлĕ Çар Механизацийĕпе Моторизацийĕн И. В. Сталин ячĕпе тăракан Академийĕнче вунă стипенди, кашни стипендийĕ уйăхра 900-шер тенкĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Ф. Дзержинский ячĕпе тăракан Артиллери Академийĕнче вунă стипенди, кашни стипендийĕ уйăхра 900-шер тенкĕ.

Мускаври С. Орджоникидзе ячĕпе тăракан Авиаци институтĕнче вунă стипенди, кашни стипендийĕ уйăхра 400-шер тенкĕ.

Донецкри Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан Индустриальнăй Институтра вунă стипенди, кашни стипендийĕ уйăхра 400-шер тенкĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн VII пленумĕ

Февралĕн 1—2-мĕшсенче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн VII пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ М. Андреев юлташ вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен туса панă доклада сӳтсе-явăрĕ.

Доклад тăрăх пренире Стекольщиков (столовăйсен тресчĕ), Морковкин («Кожупряжь» артелĕ), Полянин (Наркомзем), Давыдов (ВКП(б) хула комитечĕ), Волгина (поликлиника), Серов (ЦК ВКП(б) çумĕнчи КПК уполномоченнăйĕ), Артемьев (Чăваш АССР Совнаркомĕ), Игнатьев (Стройтрест), Демщин (Горпромкомбинат), Каляканов (хула Совечĕ, Овчинников (промсоюз), Атлашева (ВКП(б) Обкомĕ), Васильков (Наркомместпром) юлташсем тухса каларĕç.

Пленум çакна палăртрĕ: Шупашкар хулинче вырăнти промышленноçăн предприятийĕсем тата промкооперации куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларма чĕртаварсен ресурсĕ нумай пулин те, вĕсем куллен кирлĕ таварсем: строительство материалĕсем, шкул ачисене кирлĕ япаласем, атă-пушмак, çавăн пекех продовольстви таварĕсем туса кăларас тĕлĕшпе кун вăхăтченех начар ĕçлеççĕ-ха.

Хулара ĕççыннисен атă-пушмакĕсене, тăхăнмалли тумтирĕсене юсас, тумтирсене химилле майпа тасатас тата пĕвес, утюглас, хуçалăхри савăт-сапасене, велосипедсене, сехетсене, радиоаппаратурăсене, транспорт инвентарĕсене, çавăн пекех ĕççыннисенчен атă-пушмаксемпе тумтирсем туянассине япăх организацилеме.

Пленум ВКП(б) хула комитечĕн бюроне тата Шупашкар хула советне вырăнти промышленноçăн предприятийĕсен, промкооперации тата суту-илӳ организацисен руководителĕсемпе пĕрле февралĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, вырăнти промышленноçăн предприятийĕсене организацилеме тата халичченхи предприятисене аслăлатма план тума хушнă. Шупашкар хула Советне пĕр уйăхлă срок хушшинче сырласен (клюква, шиповник, чернига т. ыт. те) хатĕрлевĕсене организацилес тĕлĕшпе практикаллă мероприятисем туса хатĕрлеме хушнă.

Пленум 1941 çулта 800 пуç сысна, 5000 чăх-чĕп, 140 пуç ĕне самăртмалла тата 70 тоннăран кая мар пулă тытмалла тесе палăртать.

Вырăнти промышленность предприятийĕсен тата промкооперацин руководителĕсене палăртнă мероприятисене халех пурнăçа кĕртсе пыма тытăнма хушнă. Çавна май хулари ĕççыннисем çитес пĕр-ик уйăх хушшинче вырăнти чĕртавартан тунă куллен кирлĕ çĕнĕ таварсем илме пултарччĕр.

Иккĕмĕш ыйтупа пленум ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ 1940 çулта Шупашкар парторганизацинче партийетре илесси мĕнле пулса пыни çинчен туса панă доклада сӳтсе-явăрĕ.

Пленум çакна палăртрĕ: Шупашкар хулинчи парторганизаци ВКП(б) Центральный Комитечĕн июль уйăхĕнче пулса иртнĕ Пленумĕ хыççăн партине çĕнĕрен членсем илес ĕç чылаях пайăхланнă. Отчетлă çул хушшинче ВКП(б) членĕн кандидатне илнисем хушшинче ВЛКСМ членĕсем 59,2 процент, хĕрарăмсем 24 процент шутланççĕ. Кандидат стажĕ иртсе кайнă кандидатсен хисепĕ чакрĕ. Çакăнпа пĕрлех партине çĕнĕрен членсем илес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Уйрăм парторганизацисем (пединститут, 1-мĕш номерлĕ типографи) партине илмелли йĕркесене пăсаççĕ, пĕр пухура темиçе заявлени пăхса тухаççĕ, тĕплĕн тĕрĕслемесĕр парти ретне йышăнаççĕ. Партине илес ыйтăва сыпаланса пăхса тухнисем ВКП(б) хула комитечĕн бюровĕнче те пулнă. Çавна май вара ВКП(б) кандидатне илсен, нумай мар вăхăт иртсенех, партвыскани панисем пулаççĕ. Уйрăм коммунистсем енчен рекомендацисем парас ĕç çине çиелтен пăхни те палăрнă.

Пленум 1940 çулта партине илни çинчен тунă отчета çирĕплетрĕ тата ВКП(б) хула комитетне, çавăн пекех пуçламăш парторганизацисене, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме, ВКП(б) Центральный Комитечĕн июль уйăхĕнчи Пленумĕн решенийĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма хушрĕ.

Пленум ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулса ĕçлеме Федоров юлташа çирĕплетрĕ.

ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн пленумĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум ВКП(б) Чăваш Обкомĕн V-мĕш пленум итогĕсем çинчен сӳтсе-явăрĕ. Доклад тăрăх пренире 11 çын тухса каларĕç.

Пленум 1940 çулта колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пынине, уйрăм колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илнине палăртрĕ. Колхозниксем хушшинче дисциплина çирĕплесе пырать. Сăмахран, Киров ячĕпе тăракан колхозра 1939 çулта колхоз производствинче 130—150 колхозник хутшăннă пулсан, 1940 çулта 300—350 колхозник хутшăнса ĕçленĕ. Уборка ĕçĕнче коммунистсем пример кăтартса ĕçлерĕç. Акă, Камбулов, Чернов, Лукьянов юлташсем ĕç нормине 150 процент тултарса пынă.

«Красная Чувашия», «Красная Армия» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем вăтам шутпа кашни гектартан 15—20 центнер тĕштырă туса илнĕ.

Апла пулсан та, Сĕнтĕрвăрри районĕ Октябрьский районпа социализмлă ăмăртăва тухса, хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлаймарĕ. Договор тăрăх, гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илмелле пулнă пулсан, 12,6 центнер кăна туса илнĕ. Çуркаçине, уборкăна кая хăварса пынă тата агротехника правилисене пурнăçа кĕртсе пыман колхозсенче начар тухăçлă тырпул пуçтарса илчĕç.

Парти райкомĕн пленумĕ машинно-тракторнăй станци начар ĕçлекипине палăртрĕ. Чăн та уйрăм бригадăсемпе трактористсем паха тĕслĕхсем кăтартарĕç. ВКП(б) членĕ Ермолаев юлташ бригади çулталăкри плана 104 процент, ĕçрен уйрăлмасăр тракторпа ĕçлеме вĕреннĕ М. Щербакова юлташ хăйĕн планне 120 процент тултарнă. МТС малта пыракансен паха опычĕсене бригадăсене куçарма тăрăшман. Вăл тракторсемпе ĕçлемелли çулталăк планне 48 процент çеç тултарнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те пысăк çитменлĕхсем пурах. Чылай колхозсенче выльăхсем валли ăша витесем туса лартаймарĕç, выльăх апачĕсене тирпейсĕр тытаканнă тĕслĕхсем те пур.

Шутпа халĕ пур колхозсенче те, çавăн пекех машинно-тракторнăй станцинче те çуракине хĕрсе хатĕрленмелле. Анчах, Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуракине хатĕрленесси япăх пулса пырать. Пленум çуракине хатĕрленес ĕçе тĕпренех вăйлатма кирлине палăртрĕ.

Единоличникла хуçалăхсем хушшинче начар ĕçленĕ. Çавна пула 1940 çулта 160 хуçалăха кăна колхоза кĕртнĕ. Хальхи вăхăтра районра единоличниксем 469 хуçалăх (8,5 процент). Парти райкомĕн пленумĕ единоличник хуçалăхсене колхоза кĕртес тĕлĕшпе ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса хăварчĕ.

Г. Закамский.

Редакци ĕçне урăхлатса çĕнетнĕ хыççăн

ВКП(б) Центральный Комитечĕ иртнĕ çулти август уйăхĕнче районсенчи хаçатсем пирки йышăннă постановлениере районри хаçат çине рабочисен, ялсенчи корреспондентсен, партипе совет активĕн материалĕсене, çавăн пекех ĕççыннисен çырăвĕсене ытларах кĕртмелле, тенĕ. Редакци аппаратĕнче ĕçлекенсен районра малта пыракансене хаçат çине çырма йышлăн явăçтармалла.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ тухиччен хаçат страницисене редакцинче ĕçлекенсем хăйсен материалĕсемпе тултарма тăрăшнă. Сăмахран, 1940 çулти июль уйăхĕнче редакци тулашĕнчи активăн материалĕсемпе 57 процент ытларах анчах усă курнă, ытти 42,6 процентне редакци сотрудникĕсем хăйсем çырнă.

Рабселькорсем хушшинче сахал ĕçленĕ, хаçат çине республикăра тухса тăракан хаçатсенчи материалсене илсе ытларах пичетленĕ. Иртнĕ çулта стена хаçат редакторĕсемпе тата рабселькорсемпе пĕр канашлу кăна ирттернĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ хыççăн редакцинче ĕçлекенсен хисепне чакартăмăр. Советпа парти активне, ялхуçалăх специалисчĕсене хаçата йышлăн явăçтарма тытăнтăмăр. Авторсемпе сыхăну тытасси вăйланчĕ, материалсене тӳрлетсе кăларасси лайăхланчĕ. Малтанхи вăхăтра хаçата çырса тăракансем 240 çын пулнă пулсан, декабрь уйăхĕнче 290 çын, вăл шутран коммунистсем 61 çын, комсомолецсем 96 çын çырса тăнă. Селькорсем хушшинче ялхуçалăх специалисчĕсем: агрономсем, зоотехниксем 14 çын, учительсем — 42, медицина работникĕсем 10 çын, ялсовет тата колхоз председателĕсем 19 çын, колхозниксем 72 çын.

Редакцине килсе тăракан çырусен хисепĕ чылаях ӳсрĕ. Малтанхи вăхăтра редакци уйăх хушшинче 60 çыру тăран илнĕ пулсан, иртнĕ çулти август уйăхĕнче 106 çыру, декабрь уйăхĕнче 172 çыру илнĕ. Çырусемпе хаçатра усă курасси те аванланса пырать, декабрь уйăхĕнче селькорсен мĕнпур çырăвĕсенчен 91,3 проценчĕпе хаçатра усă курнă.

Парти райкомĕ енчен хаçат редакцине ĕçре пулăшса, ертсе пырасси йĕркеленет. Парти райкомĕн работникĕсем те хаçат çине активлăн çырса тăма пуçларĕç.

Халĕ хаçат колхозсен пурнăçне, парторганизацисен ĕçĕсене тарăнăн илсе çутатса пама тăрăшать. Январь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче районра малта пыракан «Маяк» колхозăн ĕçĕсемпе çитĕнĕвĕсене çутатса çыртăмăр. Колхоз ĕçĕсем çинчен пуçламăш парторганизаци секретарĕ, вăлах колхоз председателĕ Минаев, ферма заведующийĕ Сыразетдинов, уллтăмăш бригадăн бригадирĕ Калимуллин, тулимар вăтам шкул директорĕ агитатор Халинов, стена хаçат редакторĕ Валимуллин юлташсем çырнă.

Райхаçат редакцийĕ декабрь уйăхен юлашки кунĕсенче стена хаçат редакторĕсемпе селькорсен районри канашлуне ирттернĕ.

Райхаçат ĕçĕнче çитменлĕхсем те пурах. Колхозсенчи, бригадăсенчи, учрежденисемпе предприятисенчи стена хаçатсене пулăшасси çителĕксĕр пулса пырать. Вĕсем пирĕн Чкаловский районра сахал мар, районĕпе пурĕ 356 стена хаçачĕ шутланать. Стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен заочнăй вĕренĕвне кирлĕ пек организацилемен. Курс пуçланнăранпа виçĕ консультаци çеç ирттернĕ.

КУЗЬМИН.

Чкаловский районри «Коммунизм Байрагы» хаçат редакторĕ.

ТАСС ПĔЛТЕРНИ

Ютçĕртывсенче, уйрăмăнах Англири хаçатсенче çакăн пек пĕлтерӳ сарăççĕ: ССР Союзĕпе Турци хушшинче вăрттăн килĕшӳ тунă пулать, вăл килĕшӳ тăрăх, Германин Балкансенче пулма пултаракан активлăхне хирĕç кĕрешме ССР Союзĕ Турцине хĕçпăшал тавраш-шĕ парса тăма пулнă, çакна май Турци комиссийĕ хĕçпăшалсем туянма Мускава тухса килет пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи пулнă: ССР Союзĕпе Турци хушшинче сӳлте кăтартса панă йышши нименле вăрттăн килĕшӳ те тата вăрттăн мар килĕшӳ те туман тата тума та шухăшламаççĕ, Мускавра Турцин хĕçпăшал туянас тĕлĕшпе ĕçлекен нименле комиссийĕ те çук, ютçĕршывсенчи хаçатсен çак пĕлтерĕвĕ вăл — пĕтĕмĕшпех пуçран шухăшласа кăларнă япала.

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

Суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем

СОВЕТСКОЕ. Февралĕн 1-мĕшĕнче Чемейри «Сеятель» колхоз клубĕ суйлавçăсемпе тулса ларнă. Сутă та илемлĕ клубра хаваслăх шевлийĕ вылять. Паян кунта суйлавçăсем 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕпе И. М. Чарыков юлташпа паллашма пухăннă.

Пухăва райком секретарĕ Г. Михайлов юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

Чи малтанах довереннăй пулса ĕçлекен учитель Гарин юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Эпир Шупашкарти тирăсран заводĕнчи рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен коллективĕ парти Обкомĕн секретарьне Чарыков юлташа СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидата тăратнине пысăк хаваслăхпа тата тулли кăмăлпа кĕтсе илтĕмĕр. Чарыков юлташа Ленин — Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ. Вăл ĕççыннисен юратнă ывăлĕ. Эпир, суйлавçăсем, суйлавсен кунĕнче — февралĕн 16-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса, Чарыков юлташăн сасăлатпăр, — тет вăл хăйĕн сăмахĕнче.

— Пирĕн ӳсĕмсем çине пăхма та савăнăçлă, — тесе пуçлать хăйĕн сăмахне «Сеятель» колхоз председателĕ Андреев юлташ. — Эпир иртнĕ çулта гектартан 100 пăт тĕштырă туса илтĕмĕр. Кăçал 120 пăтăн кĕрешетпĕр. Суйлав кунне эпир çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илетпĕр.

Торайри суйлавçăсен доверенăйĕ П. Степанов юлташ хĕрӳллĕ сăмах тухса каларĕ. Çавнашкалах С. Яковлевпа Н. Ильин юлташсем те пухура пулнисене Чарыков юлташăн сасăлама чĕнчĕç.

Юлашкинчен 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕнчен СССР Верховный Советне депутата суйлама тăратнă кандидат И. М. Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Суйлавçă юлташсем, — тет вăл,— эсир ман çине пысăк шанăç хунăшăн сире пысăккăн тавтăватăп. Эпĕ малалне те рабочи класс ĕçĕн, ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн, хамăр ĕçшывра коммунизм тăвассишĕн вăя пеллемесĕр ырми-канми ĕçлесе пырăп.

Малалла Чарыков юлташ умра тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ. Вăл колхозниксене çуракине кăтартулăн хатĕрленсе çитме, çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетсе пыма, выраннăти промышленноçа ӳстерсе куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларма, культурăна ӳстерме чĕнчĕ. Чарыков юлташ хăйĕн сăмахĕнче: «Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуç Сталин юлташ!» тесе каласан, залра ларакансем тăвăлăн алă çупрĕç тата «Сталин юлташа— «ура!»,тесе кăшкăрчĕç.

Пуху, пĕр саслă пулса, февралĕн 16-мĕшĕнче пур суйлавçăсене те Чаpыков юлташăн сасăлама, суйлав кунне производствăри пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме чĕнсе резолюпи йышăнрĕ.

ГР. ФЕДОТОВ.

* * *

СЕНТĔР, февралĕн 3-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Февралĕн 1-мĕшĕнче Шупашкар суйлав округĕнчи Сĕнтĕр районĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва районри учрежденисемпе предприятисен тата колхозсен представителĕсем—пурĕ 300 çын ытларах пухăннă.

Пухура 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Иван Матвеевич Чарыков юлташ та пулчĕ.

Пухăва ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Федоров юлташ уçрĕ.

Федоров юлташ хăйĕн сăмахĕнче СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă Чарыков юлташ çинчен чарăнса тăчĕ.

— Пирĕн районри ĕççыннисем, — тет Федоров юлташ, — суйлав кунне производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Районри малта пыракан колхозсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илеççĕ. «Çĕнĕ Юнга», «Искра» колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ. Вăрлăхсене хатĕрлесе çитернĕ, акма юрăхлă кондицине лартнă.

Унтан Ильинка ялсоветĕнчи «Хлебороб» колхоз колхозникĕсен представителĕ А. Иванова юлташ сăмах илет.

— Пирĕн ялти суйлавçăсем, — тет вăл, — февралĕн 16-мĕшĕнче суйлав участокĕсене кайса, Ленин — Сталин партин шанчăклă ывăлĕшĕн И. М. Чарыков юлташăн сасăлĕç.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулти учительница Е. Гладкова юлташ Чарыков юлташăн сасăлама ĕнсе сăмах тухса каларĕ.

Çавăн пекех ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Ефремов, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Иванова юлташсем суйлав кунĕнче — февралĕн 16-мĕшĕнче мĕнпур суйлавçăсене Чарыков юлташăн сасăлама чĕнчĕç.

Юлашкинчен 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Иван Матвеевич Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Суйлавçă юлташсем! Эсир ман çине çавтери пысăк шанăç хутăр. Унăн тав тăватăп сире. Сирĕн шанăça тӳрре кăларма тăрăшăп, — тесе каçать Чарыков юлташ.

Суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ суйлав участокĕсенче доверенăйсем пулса ĕçлеме 67 çын уйăрчĕ тата Сĕнтĕр районĕнчи мĕнпур суйлавçăсене чĕнсе каланине йышăнчĕ.

С. НАЛИМОВ.

Суйлав кампанине активлăн хутшăнать

Чăвашсен колхозлă ялхуçалăх техникумĕн коллективĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне, çавăн пекех тата ĕççыннисен депутачĕсен ырăнти Совечĕсене депутатсем суйлас тĕлĕшпе ирттерекен кампанине активлăн хутшăнать. Преподавательсем, служащисем тата студентсем суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕслерĕç. Ку ĕçре Родионов, Константинова, Богданов юлташсем питĕ тăрăшса ĕçлерĕç.

Техникумри партбюро преподавательсенчен 18 çын, студентсенчен 15 çын агитаторсем уйăрса, вĕсемпе канашлу туса ирттерчĕ. Çав канашлурах агитаторсене уйрăм участоксем сумне сирĕплетнĕ. Агитаторсем Заводская, Новая урамсене кайса суйлавçăсем хушшинче калаçусем туса ирттернĕ. Пĕтĕм техникум суйлав кампанине активлăн хутшăнса ĕçлет.

П. Волков.

Программăллă сăмах

Вунă çул каялла—1931 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче—социализмлă промышленность работникĕсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш конференцийĕнче Сталин юлташ хозяйственниксен задачисем çинчен сăмах тухса каланă. Çак программăллă сăмахра çĕршыва социализмла индустрилесси çинчен калакан сталинла вĕрентĕвĕн чи кирлĕ те паха положенийĕсене палăртса панă.

Социализмлă промышленность работникĕсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш конференцине пухнă вăхăтра промышленность реконструкцийĕ питех те паллă результатсемех панă ĕнтĕ. Ывăр индустрире тата уйрăмах хамăр çĕршывăн машиностроенине çирĕплетни халăх хуçалăхĕн мĕнпур отрăслисене, вăл шутрах çĕрĕçпе транспорта та реконструкцилеме пур условисене те туса панă. Халăх хуçалăхне реконструкцилемесĕр пур фронтра та социализмлă наступлени туса пыраççине пурнăçа кĕртме май килмен, çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетме май пулман.

Хăйĕн сăмахĕнче Сталин юлташ: хăйĕн хуçалăхне социализмла çĕнетсе улăштарма тата хуçалăха тăвăллăн ӳстерсе пыма Советсен çĕршывĕн кирлĕ условисем пурте çителĕклĕ, тесе палăрнă турĕ. Задача çакăнта пулать: çав калама çук майсемпе усă курма пĕлес пулать, промышленноçлă предприятисене тĕрĕс ертсе пыма пĕлес пулать. Çапла тума мĕскер чăрмантарнă-ха?

Халăх хуçалăхне реконструкцилессине хăвăрт пурнăçа кĕртме, хуçалăх планĕсене тултарма тата ирттерсе тултарма чăрмантаракан тĕп сăлтав вăл — техникăна хакламасăр тăни, хозяйственник-коммунистсем енчен çав техника çине тĕрĕс мар пăхни пулнă. Хозяйственниксем хăйсем çине производствăн «пĕтĕмĕшле» тесе калакан руководствине илнĕ, çавăн пек руководство вăл, пуринчен ытларах, хуть-сем çине ала пусса ларнинче пулнă. Техника çине иккĕмĕш вырăна тăракан ĕç çине пăхнă пек пăхса, хозяйственник-коммунистсем предприятин производствăллă-техникăллă пурнăçне хутшăнман, çак ĕçе буржуаллă специалистсем çине шанса панă. Çапла тума вăл реконструкци хăвăртлăхĕсене чакарасси патне кăна мар, тата хăшпĕр инженерсемпе техниксен сăтăрла ĕçĕсене тума çăмăллатасси патне те илсе пынă (шахтински ĕç, Промпарти процесĕ).

Нумайранпа ĕçлекен хозяйственник-коммунистсене техника еннелле çавăрса тăратни, вĕсене техникăна вĕренсе алла илмесĕр, производствăна тĕплĕн пĕлмесĕр хуçалăха ертсе пыма май çукки çинчен ĕнентерни питех те кирлĕ пулса тăнă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Сталин юлташ 1931 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Вăхăт ĕнтĕ производствăна хутшăнмалла мар текен çĕрĕк установкăна тĕп тума. Вăхăт ĕнтĕ урăх, çĕнĕ, хальхи тапхăра тивĕçлĕ установкăна: пур çĕре те хутшăнас установкăна пĕлсе ӳстме. Эсĕ, завод директорĕ пулсан— пур ĕçе те хутшăн, пур ĕçе те тинкерсе пăх, ниме те асăрхамасăр ан хăвар, вĕрен тата тепĕр хут вĕрен. Большевиксен техникăна вĕренсе алла илмелле. Вăхăт ĕнтĕ большевиксене хăйсене специалистсем пулма. Техника реконструкци тапхăрĕнче пурне те татса парать» («Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла издани, стр. 319).

Сталин юлташ: коммунист-хозяйственниксем техникăна вĕренсе алла илме тивĕçлĕ, тесе каланă. Çакăнсăр вĕсем социализмлă предприятисен чăнăн руководителĕсем пулма пултараймаççĕ, производствăра единоначальниксем пулма пултараймаççĕ.

«Час-часах: мĕншĕн пирĕн единоначали çук? — тесе ыйтаççĕ, — тесе каланă Сталин юлташ. — Эпир техникăна алла çавăрса иличчен вăл пулмасть, пулас та çук. Пирĕн хушăра, большевиксем хушшинче, техника ыйтăвĕсене, экономикăпа финанс ыйтăвĕсене лайăх пĕлекен çынсем çителĕклĕ таран пуличчен, пирĕн чăн-чăн единоначали пулас çук. Темĕн чухлĕ резолюцисем çырăр, киремĕнле сăмахсемпе тупа тăвăр, анчах заводсен, фабрикăсен, шахтăсен техникине, экономикине, финансне вĕренсе алла илмесен, — усси пулмасть, единоначали пулмасть» (çавăнтах стр. 317).

Большевик-хозяйственниксене техника еннелле çавăрасси çинчен Сталин юлташ панă историллĕ кăтартусене пурнăçа кĕртни халăх хуçалăхне реконструкцилес задачăна пурнăçлама пулăшрĕ.

«Сталин юлташ тухса каланин историллĕ пĕлтерĕшĕ çакăнта пулнă: вăл хозяйственник-коммунистсем техника çине йĕрĕнсе пăхнине пĕтернĕ, хозяйственник-коммунистсене техника еннелле çавăрнă, большевиксем хăйсен вăйĕпе техникăна вĕренсе алла илессишĕн кĕрешмелли çĕнĕ тапхăра пуçласа янă, çакăнпа вара халăх хуçалăхне реконструкцилессине сарса ярас ĕçе çăмăллатнă» («ВКП(б) историйĕ», чăвашла издани, стр. 383.).

Сталин юлташ, социализмлă тăван çĕршыва сыхласа хăварас тата пирĕн тăван çĕршыв никама пăхăнмасăр турăнассине тĕреклетсе пырас обязаноçа асра тытса, йывăр индустрие малалла та аталантарса пыма, социализмлă строительствăн хăвăртлăхĕсене малалла ӳстерсе пыма кирлине никĕслесе панă. Сталин юлташ çапла каланă: «Эпир малта пыракан çĕршывсенчен 50—100 çул хушши кая юлнă. Пирĕн çав хушша вунă çул хушшинче чупса тухмалла. Е эпир çакна тăвăпăр, е пире лучăркаса тăкĕç», — тенĕ.

8 çул иртрĕ, вара 1939 çулăн пуçламăшĕнче, партин XVIII съездĕнче Сталин юлташ: производство техники тĕлĕшпе Совет çĕршывĕ ытти кирек хăй çĕршывпа танлаштарсан та чи малта пыракан çĕршыв пулса тăчĕ, тесе калама пултарчĕ.

Социализмлă строительствăри пысăк хăвăртлăхсен результатчĕсем çакăн пек ĕнтĕ, çавăн пек пысăк хăвăртлăхсем çирли çинчен Сталин юлташ 1931 çулти февраль уйăхĕнче хозяйственниксен задачисем çинчен каланă хăйĕн сăмахĕнче никĕслесе панă.

* * *

Халăх хуçалăхне реконструкцилении çитĕнĕвĕсем калама çук пысăк. Анчах вĕсем большевиксене лăплантарса лартмалла мар, лăплантарма та пултараймаççĕ. Капитализмлă йĕриташăвăрринче пурăнакан социализмлă обществăн интересĕсем техникăна малашне пысăк хăвăртлăхсемпе аталантарса пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме хушаççĕ.

Классемсĕр, социализмлă обществăна туса çитерни тата майĕпен коммунизма куçса пыни СССР халăх хуçалăхĕн мĕнпур отрăслисен производствăлă-техникăллă базине малашне те вăйлăн аталантарассипе пĕр уйăрăлми çыхăнса тăраççĕ.

Коммунизм принципĕсене пурнăçа кĕртес тата потребноçсем тăрăх валеçесси çине куçас пулсан, производствăллă мощноçсене чылай аслатмалла, çĕршывра ялхуçалăх продукцийĕ мĕн чухлĕ кирлĕ таранах пулмалла тăвас пулать, промышленность продукцийĕпе куллен кирлĕ таварсене туса кăларассине нумай хут ӳстермелле, малта пыракан капитализмлă çĕршывсене экономика тĕлĕшĕнчен те, урăхла каласан, промышленность туса кăларакан продукци пĕр çын пуçне мĕн чухлĕ тивни енчен те хăваласа çитсе иртсе каймалла. Çак ӳсĕм вăл производствăллă аппарата ахаль ӳстернипе мар, ăна пахалăх енчен улăштарнипе, техника тĕлĕшĕнчен пĕр чарăнса тăмасăр, яланах малалла туртăнса пынипе, пĕр вырăнта пăчланса чарăнса тăнине, техникăллă кивĕ нормăсене т. ыт. хирĕç кĕрешнипе пулса иртмелле.

Коммунизм чи малта пыракан, вăйăн аталаннă техника çинче никĕсленсе тăрать. Коммунизмăн техникăллă базин тĕп элеменчĕсен пĕри вăл — **машинăсен автоматла системи пулса** тăрать, автоматла системăра производствăллă процесс этем алли пырса тĕкĕнмесĕрех пулса пырать. Автоматизаци ĕçĕн производительнăй вăйăне ӳстерет, продуктсем мĕн чухлĕ кирлĕ таранах пулмалла тăвать, продуктсене çавăн пек мĕн чухлĕ кирлĕ таранах тума техникăн кучухнехи шайĕ пултараймасть.

Коммунизмăн техникăллă базинчи кирлĕрен те кирлĕ элемент вăл электрификаци пулса тăрать. Ленин коммунизмлă общество тумашкăн электрификаци ĕçе татса паракан вырăн йышăнса тăрать тесе паллă тунă.

Социализмран коммунизма куçма техникăллă база хатĕрлес ĕçре производствăна химизацилени те, веществопа тата энергипе усă курас сĕрте **химиллĕ методсене ĕçе кĕртни калама** çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Химизаци — çĕршыв оборонине тĕреклетмелли кирлĕрен те кирлĕ никĕс. Химизаци социализмлă хуçалăха малашне те чечеклентерсе пыма çĕнĕ вăй хушса парать: производствăллă процеса хăвăртлатать, обществăллă ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерет, производствăн чĕртавар базине аслатать, усăллă веществосен хисепне пысăклатать, ĕрĕ материалсемпе, отходсемпе икĕмĕш хут усă курма май парать т. ыт.

* * *

Техникăпа экономикăна малалла ӳстерсе пыни — çĕршывăн оборона пулăрулăхĕн никĕсĕ тата оборона пултарулăхне пур майсемпе те вăйлатса пымалли гаранти пулса тăрать.

Хальхи вăхăтра тĕнчере империализмлă иккĕмĕш вăрçă çулăмĕ вăйăнса тăнă чухне, пĕтĕм тĕнчери обстановка ĕрлĕрен кĕтмен ĕçсем кăларса тăратассине хăратса тăнă чухне, вунă çул каялла хозяйственниксен конференцийĕнче Сталин юлташ техника ĕçе татса паракан вырăн йышăнса тăни çинчен тата ăна пысăк хăвăртлăхсемпе аталантарса пыма кирли çинчен кăтартса панисем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Капитализмлă йĕриташăвăлăхра пурăнса, социализм çĕршывĕ хальхи вăхăтра, вунă çул каялла пулнă пекех, техника аталанăвĕн хăвăртлăхĕсене чарса гăма, чакарса пыма пултараймасть. 1931 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче Сталин юлташ каланă çак сăмахсем паянхи куншăн та хăйсен вăйне нимĕн чухлĕ те çухатман:

«Хăвăртлăхсене чакарма юрамасть! Йăлтах урăхла, вĕсене мĕн вăй тата мĕн май çитнĕ таран ӳстерсе пырас пулать. Çакна тума пирĕн ССР Союзĕн рабочийĕсемпе хресченĕсен умĕнчи обязательствисем хушаççĕ. Çакна тума пирĕн пĕтĕм тĕнчерик рабочи класс умĕнчи обязательствăсем хушаççĕ» («Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла издани, стр. 317).

Социализмлă экономикăн аслăланса пыракан воспроизводствине туса пымалли кирлĕрен те кирлĕ май вăл çӳллĕ техника кăна мар, тата пысăк квалификацилĕ ĕç вăйĕ те пулса тăрать.

Маркс тата Ленин вĕрентĕвĕ тăрăх Сталин юлташ производство процесĕнче ĕççыннипе пĕрремĕш вырăн йышăнса тăнине пĕр хутчен мар паллă тунă. Ĕççыннипе массисем—çĕршывăн тĕп производительнăй вăйĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем производствăн ытти мĕнпур элеменчĕсене ĕçе кĕртсе малалла илсе пыраççĕ.

Металлургсем умĕнче каланă сăмахра Сталин юлташ çапла каланă: партин «Техника реконструкци тапхăрĕнче пурне те татса парать» текен лозунгне, çак лозунг техникăна ӳстерме хушать — урăх нимĕн те çук тесе шутласа, нумайĕмĕ механически ăнланнă. Анчах та çынсемсĕр техника вилĕ япала пулса тăрать, техникăна çынсенчен уйăрма — ăна ĕçлеттерекен çынсенчен уйăрма юрамасть. Сталин юлташ çапла паллă турĕ: «Техника реконструкци тапхăрĕнче пурне те татса парать» текен лозунг çара техникăна мар, çынсем ертсе пыракан техникăна асра тытать. Çак лозунга çапла çеç ăнланмалла.

Техникăна вĕренсе алла илесси пирĕн кадрсенчен, ĕççыннисенчен пысăк культура ыйтать. Кадрсен тата мĕнпур ĕççынни массисен культурăллă шайĕ — ĕç тухăçлăхне малашне те ӳстерсе пымалли кирлĕрен те кирлĕ факторсенчен пĕри пулса тăрать.

Коммунизма куçни ĕççыннисен тата кадрсен культура шайĕ тĕлĕшпе пысăк требованисем кăларса тăратать. Партин тата халăх кĕрешĕвĕн пысăк тĕллевĕ — коммунизм тăвас тĕллев енчен илсе пăхсан, пирĕн хальхи вăхăтра культура çителĕксĕр-ха. Çапла, сăмахран, пирĕн заводсенчи пĕрремĕш класлă оборудовани тепĕр чухне çынсен техникăллă культурăсăрлăхне пула пăсăлса каять. Брак тата ĕç тухăçлăхĕ çителĕксĕр пулни те час-часах культура аялти пусăмра тăнинчен килеççĕ.

Сталин юлташăн историлл

ЗООТЕХНИКА КĔТЕССИ

Лашасене тĕрĕс пăхасси тата вĕсемпе усă курасси

ВКП(б) XVIII съезчĕ пирĕн умма пысăк задача лартрĕ: виççĕмĕш пятилеткăра лашасен хисепне 35 процент ӳстермелле. Çак задачăна ăнăçлăн татса парас çĕрте лашасене тĕрĕс ăнăхни тата вĕсемпе ĕçре пĕлсе усă курни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Апла пулсан та, вĕсемпе колхозсенче лашасене пăхас, вĕсемпе усă курас ĕçе начар организацилеНĕ.

Лаша ялхуçалăхĕнче кăна мар, Хĕрлĕ Çарта та пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та кашни колхозăн, лаша ферминче ĕçлекен кашни работникăн лашасене пăхассине тата вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курассине йĕркелесси-шĕн кĕрешмелле. Чи малтанах лашасене пăхма уйрăм конюхсем, ĕçлеме—уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетмелле. Çавăн пек хуçасăрлăха пĕтернĕ çĕрте лашасем самăр пулаççĕ, кĕсресене пурне те пĕтĕлентерсе хăвараççĕ, тихасене ăнăçлăн пăхса çитĕнтереççĕ.

Лашасем таса, çутă витесенчи стойлăсенче тăмалла, урайне типĕ улăм е урăх япаласем сарса памалла. Лашасене кашни кун хырчăкласа тасатмалла, анчах вĕсене вите сывăхĕнче мар, ятарласа уйăрнă урăх вырăнта ирхине, ĕç умĕн тасатас пулать. Вĕсене тасатнă çĕрте щеткăпа тата скребницăпа усă кураççĕ. Хăшпĕр колхозсенче лашасене скребницăпа хырчăкласа тасатаççĕ. Çакă вăл лашасемшĕн сиенлĕ, вăл вĕсен ӳт-пӳне амантма пултарать. Скребницăпа щеткăна тасатаççĕ, лашасене щеткăпа кăна хырчăкласа тасатмалла. Çуллахи вăтăтра епле пулсан та лашасене ытларах шыва кĕртме тăрăшас пулать.

Лашасене пăхас çĕрте таканласси тата лаша чĕрнисене тасатса тăрасси пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Лашасене опытлă тимĕрçĕсен таканламалла. Пĕтĕ кĕсресен таканĕсене, вĕсем хăмлас умĕн нкĕ уйăх малтан кăларса илес пулать.

Лашасемпе тĕрĕс усă курас тесен вĕсене пĕлсе тăрантармалла. Ĕç лашисене талăкра тăватă хутчен тăрантарсан аванрах. Апат парас умĕн малтан лашасене тĕплĕн пăхса тухмалла, вĕсене çĕрнĕ, кăвакарнă тата шăннă апат çитерме юрамасть. Чи лайăх апат—çаран ути, клевер тата люцерна, çуртри улăмĕ, сĕлĕ т. ыт. те. Хĕллехи вăхăтра пăтратса та çитерме кирлĕ. Малта пыракансен опычĕсем тăрăх колхозсене лашасен чĕрĕ виçи мĕн чухлĕ пулнине тата мĕнле ĕçре ĕçленине кура çакнашкал нормăпа (килогрампа) тăрантарма сĕнме юрать:

Чĕлĕ виçе	Ĕçлемен чухне		Çăмăл ĕçре		Вăтам ĕçре		Йывăр ĕçре	
	Апат единици	Белок	Апат единици	Белок	Апат единици	Белок	Апат единици	Белок
400	4,8	0,26	6,1	0,40	7,7	0,54	10	0,66
500	5,5	0,30	7,7	0,50	9,7	0,63	12,5	0,83
600	6,2	0,33	9,2	0,60	11,6	0,81	15	1,00

Шăварасса лашана хăш вăхăтра ĕçес килнĕ, çавăн чухне, анчах талăкра виçĕ хутран кая мар шăварас пулать. Шăвармалли шыв таса пулмалла, ытлашши сивĕ мар пулма кирлĕ. Лĕп шывпа шăварма кирлĕ мар. Тарланă хыççăнах шăварни пысăк сиен кӳме пултарать. Çавăнпа тарланă лашасене тар типсе çитнĕ хыççăн кăна шăвармалла.

Лашасемпе ĕçре усă курас тесен вĕсене кӳлмелли хатĕрсем: хăмăтсемпе ĕнерчĕксем, тилхепесем, йĕвенсем юсаслă тата çителĕклĕ пулмалла. Анчах хăшпĕр колхозсенче çак ыйту çине питех çăвăрăнса пăхмаççĕ. Лаша кӳлмелли таврашсене кирлĕ пек пăхса усрамаççĕ, час-часах пĕр лашан хăмăтне е ĕнерчĕкне тепĕр лашана тăхăнтараççĕ. Çавна пула вара лашана ĕнерчĕк е хăмăт тивет, суранлатать. Кӳлмелли хатĕрсем кашни лашан хăйĕн уйрăм пулмалла. Вĕсем пĕр вырăнта çакăнса тăмалла. Чĕнрен тунă хатĕрсене таса тикĕтпе тăтăшах сĕрсе тăрас пулать.

Лашасемпе тĕрлĕрен ĕççенче—вăрман ĕçĕнчен пуçăнса уйхир ĕçĕсене çитичченех ĕçлеççĕ. Çавăнпа та кашни колхозăн лашасемпе план тăрăх усă курмалла, вĕсене уйрăм ĕççем çумне — начартарах лашасене çăмăлтарах ĕçем тума, вăйлисене—йывăр ĕçсем тума çирĕплетмелле. Пĕтĕ кĕсресене иккĕмĕш çурма вăхăтран çăмăл ĕçе, хăмлас умĕн икĕ уйăх малтан тата хăмланă хыççăн икĕ эрне хушши ĕçрен пачах хăтармалла. Ĕçрен хăтарнă пĕтĕ кĕсресене уйрăм рационпа—белок тата витамин тĕлĕппе пуян апатпа тăрантармалла. Витаминлă апат шутне шăтарнă тĕштырă кĕрет, ăна талăкра 1—1,5 килограмм пама юрать.

Ĕçлеме пуçлас умĕн колхозникăн лашана мĕнле тăрантарнине, мĕнле шăварнине тĕплĕн тĕрĕслемелле. Ĕçлени чухне вара лашасене ывăнтармалла тата лав çине ытлашши йывăр тиемелле мар. Хĕллехи вăхăтра, ĕç вăхăтĕнче кантарнă чухне мĕнпе те пулсан витмелле. Ĕçленĕ чухне лашасене те миçе хутчен те кантарас пулать. Лашасен ĕç вăхăчĕ—хĕлле 8—9 сехет, çулла—12—13 сехет шутланать, лашасен ĕç кунĕ вăтам шутпа вунă сехет пулма кирлĕ. Иывăр ĕçре 8 сехетрен мала ĕçлемелле мар. Лайăх тăрантарса пăхнă тата ĕç вăхăтĕнче тĕрĕс усă курнă чухне лаша 8—10 сехет ĕçлеме пултарать.

Конюхăн лашана колхозникрен йышăннă чухне те лаша мĕнле пулнине тĕрĕслемелле. Амантнă тĕслĕхсем пулсан, ун пирки çийĕнчех мерăсем йышăнмалла.

Çурхи ĕçсем пуçланас умĕн, пĕр уйăх малтан пур лашасене те мĕнле самăр тата сывлăхлă пулнине хакласа тухмалла. Начар, ырхан лашасене ĕçрен хăтарса, вĕсем хăвăрт юсанса çичĕр тесе лайăх апат çине тăратмалла. Çуракине мăнтăр та чăтăмлă лашасемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешмелле.

Çакна астăвас пулать, лашасем вĕсене тăрăшса пăхнине юратаççĕ. Юратса тĕрĕс пăхсан лаша мĕн пама пултарнине йăлтах парать.

В. СОЛОВЬЕВ.

Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ, ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

Татах колхозсенчи штатсем çинчен

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенче штатсем ытлашши пысăк. Районĕпе ĕçлеме пултаракан 13.130 колхозникрен 2.934 çын административлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Çакăн пек пысăк штата тытса тăма колхозсем иртнĕ çулта 765.357 ĕçкунĕ панă е вăл мĕнпур ĕçкунĕсенчен 30 процент шутланать.

Районри хăшпĕр колхозсенче штатсем ытла та пысăк. «Ударник» колхозра ĕçлеме пултаракан колхозниксем пĕтĕмпе 73 çын. Вĕсенчен 27 çын колхозăн управлени аппаратĕнче ĕçлеççĕ. Çак штат валли иртнĕ çулта 6.206 ĕçкунĕ панă, вăл çулталăкри пĕтĕм ĕçкунĕсенчен 44 процент пулать.

Шомикри «Колос» колхозра 1939 çулта администраципе управлени аппаратĕнче 56 çын пулнă пулсан, 1940 çулта вăл штата татах ӳстерсе 66 çынна çитернĕ.

Сĕнтĕр районĕнче пĕтĕмпе 106 колхоз шутланать. Çак колхозсенче 670 конюх ĕçлеççĕ. Çапла вара кашни 6 лаша пуçне пĕр конюх тивет, çав вăхăтрах пĕр конюхăн норма тăрăх 10 лаша пăхмалла. Çитменнине тата конюхсем витерен тислĕксене те хăйсем кăлармаççĕ, вĕсене ытти колхозниксем кăларса татах ĕçкунĕ илеççĕ.

Штата ӳстерсе яни енчен илсен «Серп» колхоз районра палăк вырăнта тăрать. Ку колхозра пĕтĕмпе те 15 хуçалăх çеç. Ĕçлеме пултаракан 24 колхозникрен 8 çын правлени аппаратĕнче шутланаççĕ. Çаксене валли 1940 çулта 1.549 ĕçкунĕ уйăрса панă. Колхозăн 7 лашине 2 конюх пăхаççĕ.

Тепĕр тĕслĕх. Юнгăри Войков ячĕпе тăракан колхозра транспорт заведующийĕнче ĕçлеме пĕр çын уйăрнă. Ăна çулталăк ĕçленĕшĕн 300 ĕçкунĕ параçă. Анчах та кунта транспорт таврашшĕсем çапах та çитмеççĕ. 3 лаша валли пĕр çуна çеç тивет. Çавăн пекех сӳмен-ĕнерчĕксем те çитмеççĕ. Анчах та транспорт заведующийĕ Ф. Бархаткин юлташ колхозри транспорта йĕркелес тĕлĕппе тăрăшса ĕçлемен. Вăл ытти колхозниксемпе пĕрле уйхир ĕçĕнче тата ытти ĕçсенче те ĕçлесе вĕсемпе танах ĕçкунĕ илсе пурăнать. Ку колхозăн председателĕ Б. Фролов юлташ халăх судьин заместителĕ пулса ĕçлет. Анчах колхозра çурчине яхăн ĕçлет çеç пулин те, колхозра та ĕçкунĕ пĕтĕмĕшпех илет, халăх судĕнче ĕçленĕшĕн те пĕтĕм уйăхри ĕçукçине илсе пурăнать. Тĕслĕхрен, хĕрсе уйхир ĕçĕ пынă вăхăтра, халăх судьи отпуска кайнă пирки, Фролов юлташ судья вырăнне юлнă. Пĕр уйăх хушши колхоза пырса курман пулсан та, ăна çав уйăхшăн ĕçкунĕсене те пĕтĕмĕшпех панă, халăх судĕнче ĕçленĕшĕн те 600 тенкĕ ĕçукçи илнĕ.

Тептери «Бехтерево» колхозра пĕтĕмпе те 7 хуçалăх çеç. Кунта ĕçлеме пултаракансем 15 çын, вĕсенчен 6 çын правлени аппаратĕнче шутланса тăраççĕ. Колхоз 3 лаша, 4 ĕне тата 2 пăру усрать. Анчах вĕсен склад заведующийĕ, счетовод, колхоз председателĕ тата ыт. те пур.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Колхозсенчи управлени аппарачĕ çинчен» 1941 çулти январĕн 15-мĕшĕнче йышăннă постановлени çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме хушать. Çĕрĕç органĕсен, колхозсен çак постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕппе халех ĕçе тытăнас пулать.

ПР. ЯРГУНЬКИН.

Фермăсем лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç

ИШЛЕЙ. «Большевик» колхозри сĕтçу ферминче ĕçлекенсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе сĕт тăратасси çинчен» йышăннă постановленине хапăл туса кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ постановлени тăрăх, колхоз кăçал иртнĕ çулхинчен 200 килограмм сахалрах, пĕтĕмпе — 103 килограмм сĕт парать. Фермăра ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерме, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарма пулаççĕ. Фермăра уйрăм ĕнесенчен талăкне 12—15 литр сĕт суса илеççĕ. Халĕ государствăна 72 килограмм çу леçсе панă. Çулталăк планне февраль уйăхĕнче пĕтĕмпех тултарма хатĕрленеççĕ.

Çак постановлени пичетленсе тухнăранпа ытти колхозсен фермисенче те ĕçсем лайăхланма пуçларĕç. Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерессишĕн кĕрешӳ сарăлса пырать. «Париж Коммуни», «Авангард», «Ударник» колхозсем январĕн 20-мĕшне сĕт-çу тăратмалли 1941 çулти плана 20—40 процент тултарнă. «Ырăш пулăх» колхоз, ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, сĕт-çу тăратмалли плана çак кунсенчех тултарма пулчĕ.

С. Горланов.

Çĕнçĕре куçса пынă колхозниксем организацилеНĕ «14 лет Октября» колхоз (Амур облаçĕнчи Свободненский район) — 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин кандидачĕ. 1940 çулта колхоз стандартлă пӳртсем 42 пӳрт лартнă.

Укерчĕк çинче: çĕнçĕре куçса пынă колхозниксен пӳрчĕсем.

Н. КОНОВАЛЕНКО фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

Ялсовет исполкомĕсен председателĕсене выставкăна хутшăнтарасси çинчен

1939 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пирĕн республикăран пĕр ялсовет исполкомĕн председателĕ те пулман. Иртнĕ çулта та 4 ялсовет исполкомĕн председателĕ кăна выставка участникĕ пулнă. Вĕсенчен Севастьян Филиппович Агеев юлташ — Куславкка районĕнчи Аманик ялсовет председателĕ пĕчĕк кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Мĕн пирки-ха ялсовет исполкомĕсен председателĕсене выставкăна сахал хутшăнаççĕ? Вĕсем хушшинче выставка участникĕ пулма тивĕçлĕ çынсем çук-и мĕн вара? Ку пачах тĕрĕс мар. Пирĕн республикăра 619 ялсовет. Лайăх ĕçлекен ялсоветсем тата ялсоветсен исполкомĕсен председателĕсем сахал мар, вĕсенчен нумайĕшĕ выставка участникĕсем пулма тивĕçлĕ. Анчах ялсовет исполкомĕсен председателĕсене выставкăна хутшăнтарас ĕç çине райсовет исполкомĕсем пачах çителĕксĕр çăвăрăнса пăхаççĕ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин «Новое в деревне» отделĕнче икĕ çул хушши ĕнтĕ Совет Союзĕнчи чи лайăх ялсоветсен тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсен ĕçĕсене анлăн кăтартса пачĕç. Хальхи вăхăтра пур çĕрте те ялсовет исполкомĕсен председателĕсене 1941 çулта 2 миллион тенкĕ укçа расходлама пăхнă.

Карело-Финн ССР Республикине çураки тĕлне ытти республикăсемпе областсенчен татах та куçса килмелле. Халĕ колхозсем вĕсене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ, çĕнĕ çуртĕсем тăваççĕ.

Кунти çĕршывра пурăнма питех те лайăх. Кашни колхозниках выльăх-чĕрлĕхсем нумай усрама пултарать. Выльăх апачĕ çителĕклĕ. Çу вăхăтĕнче кĕтӳ кĕтмелли вырăнсем нумай тата аслă. Выльăхсене çитерме çĕрулми, кăшман пысăк тухăçлă пулать.

Вăрмансем пысăк, шывсем те нумай. Вăрманта тилĕсем, пакшасем, мулкачсем, ăсансем, хир чăххисем йышлă пурăнаççĕ. Юханшывсенче тата кӳлĕсенче пулă тытма пулать. Колхозниксене хурăкăвакалсем усрама та лайăх. Государство колхозсене тата колхозниксене пысăк пулăшу парать.

Чăваш республикинчен килнĕ колхозниксем «Пограничник», «Юхма», «Красная Чувашия», «Красная Знамя», «Восток», Сталин тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче пурăнаççĕ. Вĕсем кĕркине пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. Хальхи вăхăтра çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе пыраççĕ.

Эпир, Чăваш республикинчен килнĕ колхозниксем, хамăр тата пурăнма куçса килме чĕнетпĕр. Кунта ӳркенмесĕр тата тăрăшса ĕçлесен тырпулсем те, укçа-тенкĕ те çителĕклĕ илме пулать.

Е. Поручиков.

«Красноармеец» колхоз, Карело-Финн ССР, Куркийоки районĕ.

Пирĕн тата пурăнма куçса килме сĕнетпĕр

Карело-Финн ССР Республикинчи Ладога кӳлли хĕрринче Куркийоки ятлă пĕчĕк хула ларать. Çак хула çĕнĕ союзлă республикăри çĕнĕ район центрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Куркийоки районĕнче тĕштырăсем çеç мар, пысăк тухăçлă пахча-çимĕççем те туса илме пулать.

Партипе правительство Карело-Финн республикинчи çĕнĕ районсене куçса унти çанталăк пуянлăхĕсемпе усă курма чĕнсе, каласанах, кунта вырăсем, украинецсем, белоруссем, еврейсем, карелсем, тутарсем, чăвашсем тата ытти халăхсем те килчĕç. Финсем пăрахса хăварнă пушă вырăнсенче колхозсем организацилерĕç. Çĕнĕ пурнăç тума тытăнчĕç.

Иртнĕ 8 уйăх хушшинче районĕпе 76 колхоз организацилеНĕ. Колхозсенче 68 таварлă сĕт-çу ферми, 51 сурăх ферми, 43 сысна ферми тунă. Фермăсенчи выльăхсен хисепне планпа пăхнă чухлĕ илсе çитернĕ. Çав вăхăтрах ӳнесĕр колхозниксене пурне те тенĕ пекех пăрусем туянтарнă. Государство колхозсемпе колхозниксене выльăх-чĕрлĕхсем туянма нумай сроклăха 2 миллион тенкĕ укçа кивçен панă.

Çĕнĕ районра промышленность предприятийĕсем те ӳссе пыраççĕ. Районĕпе 16 предприяти ĕçлеме пуçланă.

Район хуçалăх тĕлĕппе çирĕпленсе пынипе пĕрлех, культура строительстви енĕпе те пысăк çитĕнӳсем турĕ. Пурĕ 36 шкул уçнă, вĕсенче учительсем 105 çын ĕçлеççĕ. Шкулсенче 2177 ача вĕренет. Халăха вĕрентес ĕç валли çĕрте те ялсовет исполкомĕсен председателĕсене 1941 çулта 2 миллион тенкĕ укçа расходлама пăхнă.

Карело-Финн ССР Республикине çураки тĕлне ытти республикăсемпе областсенчен татах та куçса килмелле. Халĕ колхозсем вĕсене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ, çĕнĕ çуртĕсем тăваççĕ.

Кунти çĕршывра пурăнма питех те лайăх. Кашни колхозниках выльăхчĕрлĕхсем нумай усрама пултарать. Выльăх апачĕ çителĕклĕ. Çу вăхăтĕнче кĕтӳ кĕтмелли вырăнсем нумай тата аслă. Выльăхсене çитерме çĕрулми, кăшман пысăк тухăçлă пулать.

Вăрмансем пысăк, шывсем те нумай. Вăрманта тилĕсем, пакшасем, мулкачсем, ăсансем, хир чăххисем йышлă пурăнаççĕ. Юханшывсенче тата кӳлĕсенче пулă тытма пулать. Колхозниксене хурăкăвакалсем усрама та лайăх. Государство колхозсене тата колхозниксене пысăк пулăшу парать.

Чăваш республикинчен килнĕ колхозниксем «Пограничник», «Юхма», «Красная Чувашия», «Красная Знамя», «Восток», Сталин тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче пурăнаççĕ. Вĕсем кĕркине пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. Хальхи вăхăтра çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе пыраççĕ.

Эпир, Чăваш республикинчен килнĕ колхозниксем, хамăр тата пурăнма куçса килме чĕнетпĕр. Кунта ӳркенмесĕр тата тăрăшса ĕçлесен тырпулсем те, укçа-тенкĕ те çителĕклĕ илме пулать.

Е. Поручиков.

«Красноармеец» колхоз, Карело-Финн ССР, Куркийоки районĕ.

Колхозниксен тӳрĕ сăмахĕ

Колхозниксен пухăвĕ пырать. Тупăша валеçесси çинчен калаçаççĕ.

— Ĕçкунĕсем пуçне тырă сахалтарах,—сасă илтĕнчĕ пухура ларакан колхозниксем хушшинчен.—Ăçтан та пулсан урăх мел—тупăш ытларах валеçмелле май тупма май çук-и?

Пухура ларакан колхозниксем пурте вăл сасă илтĕннĕ еннелле чăр-р! пăхса илчĕç.

Колхозниксемшĕн палăк çын ку — И. Отрепанов. Сăмах чĕнмерĕç. Татах мĕн калать-ши ку? Çапла шухăшласа вĕсем ун çине тинкерсе пăхса ларнă пек туйăнчĕ. Отрепанов малалла сăмах калать:

— Пирĕн Буденный ячĕпе тăракан колхозăн планпа 50 пуç лаша пулмалла. Халĕ 40 пуç пур. Вăл лашасем валли, 50 пуç лаша валли тесе, 749 центнер фураж уйăрса хăварнă. Мĕн тума ун чухлĕ фураж кирлĕ? 40 пуç лаша валли хăварсан та тем пекех. Ытлашши фуража ĕçкунĕсем çине валеççе ямалла... Што там особенново. Хамăн мар, колхозниксене лайăхрах пултăр тетĕп.

— О-о, эс мĕн шухăшлатăн!...—илтĕнчĕ сасартăк пĕр харăс темиçе сасă.—Апла май килмест, ун пек эпир 31 центнер ытларах фураж фондне катма пултарайманшăн. Пирĕн планпа лашасен хисепне 50 пуçа çитермелле пулсан, вăл пирĕншĕн закон, вăл плана кирек мĕнле пулсан та тултармалла. Лашасен хисепĕ сахалли фураж фондне чакарассине пĕртте пĕлтермест. Эпир, ăна эсĕ ăнланатăн пулсан, умра тăракан ĕçсем çине пăхатпăр...

Колхозниксен тӳрĕ сăмахĕнчен, юлашкинчен, çакă тухса тăчĕ: Отрепанов — маттур, вăй-питти çын. Колхоз ĕçĕнчен ялан пăрăнса çӳрекен наян. Уборка вăхăтĕнче вăл ирĕкре ĕçлесе çӳренĕ.

Колхозниксем унăн сĕнĕвне сирсе пăрахрĕç: фураж фончĕпе хăйĕн вырăнĕнчех усă курмалла, лашасем ĕрчетес плана тултармалла,—терĕç.

Унпа пĕрлех вĕсем хăйсен тĕп шухăшне çапла палăк туса хăварчĕç: кам наян, кам сахалтарах ĕçкунĕ тунă, унăн ĕçкунĕсем пуçне тырă та сахалтарах тивет.

ИВ. МОСЕЕВ.

Машинăсем юр айĕнче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Байсубино ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуракине начар хатĕрленсе пырать. Ялхуçалăх машинисене юсаса тирпейлесе лартман. Молотилкăсем тата плугсем юр айĕнче лараççĕ.

Колхозăн планпа 225 гектар çинче юр тытмалла. Анчах колхоз руководителĕсем юр тытас ĕçе хакламаççĕ, çак тарана çитсе пĕр гектар çинче те юр тытман тата щитсем те хатĕрлемен.

Колхоз председателĕ Ильин юлташ йĕркеллĕ ĕçлемест. Çуракине хатĕрленме тытăнман.

Г. Танаевский.

Куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларассишĕн

Районра сĕтел-пукансем тăвакан фабрика, тĕрлĕрен промысла артелĕсем 5 пур, анчах вĕсем ку таринчченех районри ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ парса пырайман. Фабрика тата артельсем туса кăларнă таварсенчен нумайĕшне урăх районсемпе хуласене парса тăнă. Акă, сĕтел-пукансем тăвакан фабрика иртнĕ 1940 çулта 2 пин штука ытла сĕтел туса кăларнă пулин те, вăл сĕтелсем Канаш районĕнче питех те сахал юлнă, вĕсене ытти республикăсемпе облаççене ярса тăнă. Çавнашкалах Сталин ячĕпе тăракан промартель те иртнĕ çулта тунă 900 штука çунаран Канаш районĕ валли 200 çуна çеç хăварнă, ыттисене пурне те урăх районсене ярнă. Çав хушăрах хулари предприятисемпе районри нумай колхозсем çуна илме 80—90 çухрăм таран аякка каяççĕ.

Ĕççыннисен пурнăç условийĕ лайăхланнă май, куллен кирлĕ таварсене ыйтасси ӳссех пырать. 1939 çулта Канаш хулинче кăна тĕртсе тунă пирвайăр, çыхнă кĕпе таврашĕсене 549 пин тенкĕлĕх сутнă пулсан, 1940 çулта 791 пин тенкĕлĕх сутнă. Çавăн пекех вырăнти промышленноçăн предприятийĕсенче ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем тата çимелли япаласем туса кăларасси те ӳссех пынă. 1933 çулта районри пĕтĕм мастерскойсенче 27 мăшăр атă-пушмак туса кăларнă пулсан, çак юлашки виçĕ çул хушшинче 8220 мăшăр атă-пушмак туса кăларнă. Ашкакай комбиначĕ 1935 çулта пĕтĕмпе те 22 тонна колбаса туса кăларнă пулсан, 1940 çулта 1937 тонна туса кăларнă. Çапла вара колбаса туса кăлараси, 1935 çулпа танлаштарсан, 897 процент ӳснĕ.

Вырăнти промышленноçăн предприятийĕсем туса кăларакан таварсен хисепĕ кашни çулах ӳссе пынă пулин те, çапах та вăл таварсем ĕççыннисене кирлĕ таран тивĕçтерме пултарайман.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановленире вырăнти промышленноçа куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ туса кăларас тĕлĕшпе пысăк май туса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ вырăнти промышленноçăн ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем ытларах кăларассишĕн ĕçлемелле.

Хулари магазинсемпе ларексенче пуртă, витре тата хуçалăхра кирлĕ ытти япаласем тупма çук. Канашрах тума май пури-ха çав япаласене? Паллах, май пур. Вагонсем юсакан заводăн кашни çул пиншер тонна тимĕртăмăр отхочĕсем тухаççĕ. Иртнĕ çулта заводри тимĕр-тăмăр отхочĕсене 5890 тонна ытла ытти республикăсемпе облаççене янă. Малашне ĕнтĕ вăл отходсене хуçалăхра кирлĕ таварсем тунă çĕрте вырăнтах усă курмалла пулать.

Пухура тухса калакансем пурте иртнĕ çулсенче вырăнта тăвакан япаласене ытти районсемпе республикăсене ярса тăнă пирки çавăн пек таварсенех ытти хуласенчен кӳрсе килсе пысăк расходсем туни тата вăл çитменлĕхсене малашне тумалла марри çинчен кăтартса хăварчĕç.

— Чăх-чĕп комбиначĕ кашни çулах темĕн чухлĕ стружка, çăмартасем хумалли ещĕк хăмине Горький хулинчен турттарса килнĕ. Анчах та пирĕн комбинатпа юнашарах Сталин ячĕпе тăракан промартель стружка та тăвать, хăма та çурать. Апла пулин те пире вăл артельтен вĕсене памасчĕç,—тет чăхчĕп комбиначĕн директорĕ Захватов юлташ. Кунашкал тĕслĕхсем татах та нумай пулнă.

Инвалидсен «Красный воин» артель председателĕ Корчагин юлташ хăйĕн сăмахĕнче малашне ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларас майпа артельте çĕнĕрен цехсем уçасси çинчен чăрăнса тăчĕ. Çак кунсенчех артель коверсем, хуçалăхра кирлĕ сумкăсем туса кăлараканан цехсем уçать. Кунсăр пуçне ĕççыннисенчен çне, урана тăхăнмалли кивелнĕ япаласене илсе тӳрлетсе сутмалли магазин уçать.

Канаш.

Ф. АНТОНОВ.

1941 çулта татах та лайăхрах ĕçлер

ÇĔРПУ. Сталинла виççĕмĕш пятилетка çулĕсенче Çĕрпӳ районĕнче промышленноçлă çĕнĕ предприятисем хутшăнчĕç: примус горелкисем тăвакан завод, районри апат-çимĕç комбиначĕ тата пăспа ĕçлекен арман туса ĕçе янă. Районра промышленность продукци туса кăларасси те çулсеренех ӳссе пырать. Районри предприятисем 1939 çулта 224 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă пулсан, 1940 çулта 375 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Иртнĕ çултипе танлаштарсан, ӳсĕм 50 процент пулать.

Районри апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл 1940 çулти плана 190 процент тултарчĕ. Планран иртнĕрсе 65 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Çав вăхăтрах районри хăшпĕр предприятисем çулталăк планне тултарайманрĕç. Типографи 80 процент, çу завочĕ—85 процент çеç тултарчĕç. Примус горелкисем тăвакан завод питех те начар ĕçлерĕ.

Промкооперацине кĕрекен предприятисемпе артельсем 1940 çулта икĕ миллион та 114 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларса, çулталăк планне 95,4 процент тултарнă. Кунта Çĕрпӳри профтехшкулпа Абакассинчи артель аван ĕçлесе пычĕç. Профтехшкул çулталăк хушшинче 746 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларас вырăнне 807,9 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларса, çулталăк планне 108,3 процент пурнăçланă. Çапла вара профтехшкул планран иртнĕрсе 62 пин тенкĕлĕх продукци пачĕ. Абакассинчи артель те çулталăк планне ытлашшипех пурнăçларĕ.

Çаксемпе пĕрлех плана тултарайман артельсем те пур-ха. Çĕрпӳри «Перламутр» артель 1940 çулта 947,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă пулсан, 859,5 пин тенкĕлĕх çеç кăларса, плана 90,7 процент çеç пурнăçларĕ; Хорнзорти артель плана 75,5 процент, Туçири артель 70 процент кăна тултарнă.

Çак асăннă артельсем мĕншĕн юлсă пыраççĕ? Правленинче ĕçлекенсем артель членĕсене пурне те ĕçе хутшăнтарман. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яман.

Районра стройматериалсем туса кăларасси чăтма çук çителĕксĕр пулса пырать. Стройматериалсем тăвассине районра ятларласа ĕçлекен предприятисем, артельсем пачах та çук. 1940 çулта стройматериалсем туса хатĕрлеме гăхăр колхоза план панă пулнă. Çав колхозсен 1940 çулта кирпĕч 320 пин штука, известка 300 тонна тата черепица 20 пин штука туса кăлармалла пулнă. Çав колхозсенчен «Малти Ямаш» колхоз çеç 25 пин кирпĕч туса кăларнă, ытти колхозсем вăл ĕçе пачах тытăнман.

Кунта çакна каламалла: колхоз руководителĕсем вăл ĕç çине кирлĕ пек пăхман, тума май пур çинченех ĕçе тытăнмасăр тăнă. Районри организацисем те колхозсене ку тĕлĕппе кирлĕ пулăшăва вăхăтра паман.

1941 çулта Çĕрпӳ районĕнче стройматериалсем туса кăларас ĕçе вăйлатмалла. Районра ăна тума условисем çителĕклĕ, çине тăрса ĕçлени кăна кирлĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине районри пур предприятисемпе артельсем хушшинче те анлăн сӳтсе-явса, куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви çителĕклĕ туса кăларассишĕн ĕçе пуçарса ямалла.

К. ЛЬВОВ.

Çĕрпӳри райплан экономисчĕ.

Икĕ колхозăн кăтартăвĕсем

Комсомольский районри 51 колхозран 49 колхозăн тупăш валеçмелли ведомоçене çирĕплетнĕ. Çак колхозсенче тырпул тата укçа-тенкĕ тупăшĕсене валеççе пĕтереççĕ те ĕнтĕ.

Çирĕп ĕç дисциплинишĕн, ялхуçалăх артелĕн уставне пурнăçа кĕртсе пырассишĕн тата вăйлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивлăхне ӳстерессишĕн чăннипех большевикла кĕрешнĕ колхозсенче кашни гектар çĕртен пысăк тупăш илнĕ.

«Дубовка» колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 18-шар центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. Кăçал илнĕ тупăша государство çирĕплетсе панă мĕнпур çĕр çине пайласан, кашни гектартан çакăн чухлĕ тупăш илнĕ: 7,4 центнер тĕштырă, 0,54 килограмм йĕтĕн вăрри, 0,7 килограмм йĕтĕн сӳсĕ, 9 килограмм клевер вăрлăхĕ, 0,95 центнер утă, 2 центнер силос, 13 центнер улăм, 39 литр сĕт, 2,5 килограмм аш-какай тата 1,7 килограмм çу. Çак мĕнпур тупăша базарти хакпа шутласан, вăл 4562 тенкĕлĕх пулать, урăхла каласан, пĕр гектартан 4562 тенкĕлĕх тупăш туса илнĕ.

Колхоз мĕнпур фондсене пĕтĕмпех тунă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси вăйланса пырать. Халĕ колхозра тăватă ферма.

«Мотор» колхозра пачах урăхла. Кунта государство акчĕпе çирĕплетсе панă кашни гектар çĕртен 3 центнер тĕштырă, 0,2 килограмм йĕтĕн вăрлăхĕ, 0,22 килограмм йĕтĕн сӳсĕ илнĕ т. ыт. те. Укçан шутласан, кашни гектар çĕр 1807 тенкĕлĕх, урăхла каласан, «Дубовка» колхозран икĕ хут çурă сахалтарах тупăш панă. Тырпул тухăçĕ пĕтĕмпе те 6,16 центнер кăна. Колхоз халĕ те вăрлăх фончĕ туса çитермен. 150 центнер вăрлăх çитмест. Ытти фондсене те пĕтĕмпех туса çитермен. Ĕçкунĕ çине тупăш сахал тивет.

«Мотор» колхозра «Дубовка» колхозри пек мар, унта ĕç дисциплини япăх. Ялхуçалăх артелĕн уставне пурнăçа кĕртсе пымаççĕ, колхоз производствине аталантарса

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ, 1941 çулти февралĕн 3-мĕш)

Хĕвелтухăç Африкăра уйрăмăнах февралĕн 1-мĕшпе 2-мĕшĕнче çапăçусем активлăн пынă. Пуринчен ытларах, — тесе калаҫă Итали командованийĕ февралĕн 2-мĕшпе 3-мĕшĕнче кăларнă сводкăра,—Агордатпа Баренту зонинче (Хĕвеланăç Эритрея) пит хаяр çапăçусем пулса иртнĕ, вăл çапăçусене Итали авиацийĕ хутшăннă, авиаци противник позицийĕсемпе унăн войскисен колоннисем çине тăтăшах бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

Çине тăрса çапăçнă хыççăн, тесе пĕлтернĕ Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн коммюникинче, Англи войскисем Агордата илнĕ, вăл стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан пункт, Эритрейăна сыхлас тĕлĕшпе калама çук кирлĕ пункт. Кунсăр пуçне, англичансем Агордатпа Баренту хушшинчи çула татса тухнă, Керена районĕнче (Агордатран çурçĕр-хĕвелтухăç енче) итальянецсене хĕссе пыраççĕ. Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ: хальхи вăхăтра Англи войскисем малалла кайса пырасси хытах чакасса кĕтеççĕ, мĕншĕн тесен çав районри сăрт-тулла вырăнсем противник оборонишĕн питех те усăллă, тесе çырать.

Кенире патрульнăй чăссен ĕçĕсем вăйлăн пыраççĕ.

Рейтер агентствин çар обозревателĕ Губерт Гоф, Африкăри фронтри ĕçсем мĕнле тăни çинчен тапратса, çапла палла тăвать: хальхи вăхăтра Хĕвелтухăç Африкăра Англи вăйĕсем виçĕ еннелле малалла кайса пырççĕ: пĕрремĕшĕнчен, Англи войскисем итальянецсен Эритрейăри стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан Массауана тытса илме хăтланаççĕ. Çав порта тытса илни Абиссинире итальянецсен ĕçĕсене йывăрлатма тата Англи флочĕн ĕçĕсене çăмăллатма пултарать; иккĕмĕшĕнчен, англичансем Галлабатран Абиссинири питех те кирлĕ административлă центр — Гондар еннелле куçса пыраççĕ; виççĕмĕшĕнчен, вĕсем Итали Сомалийĕнчи пысăк вырăнта тăракан порт — Могадишо патнелле пыраççĕ. Англи войскисен наступленийĕ Абиссинире итальянецсене çимĕççемпе вăрçă хатĕрĕсем илсе тăмалли опорнăй пунктран — Аддис-Абебăран пĕтĕмĕшпех уйăрса илмелле.

Çурçĕр Африкăра юлашки кунсенче вăрçă ĕçĕсем активлă пулман. Италин сывлăшри соединенийĕсем, — тесе калаҫă Итали сводкинче, — англичансен мотомеханизированнăй колоннисем çине бомбăсем пăрахнă. Рейтер агентствин спецкорĕ Дернăран пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем Ливири сăрт-туллă районсенче, Дернăран темиçе миля хĕвеланăç еннелле, Уэйвелл генералăн çарне вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

Албанире, Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, артиллерипе разведка отрячĕсен активлăхĕ палă рать. Томорица районĕнче грексен 200 çын вилнĕ, вĕсенчен виççĕшĕ — офицерсем.

Греци командованийĕ çапла пĕлтерет: фронтăн тĕрлĕрен участокĕсенче вырăнĕ вырăнĕпе пулса иртнĕ ăнăçлă çапăçусенче Греци войскисем стратеги тĕлĕшĕнчен кирлĕ позицисене йышăннă. 270 çынна тыткăна илнĕ, вĕсен шутĕнче офицерсем нумай.

Клисурăран çурçĕр енчи районра Греци войскисем, Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, хаяр çапăçусем хыççăн сăрт-туллă вырăнсене 10 миля тăршшĕ туртса илнĕ, вĕсем вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăраççĕ. Греции хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Требошине ятлă сăрт-тăва илнĕ. Греци войскисем 800 çынна тыткăна илнĕ.

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕ кăларнă сводкăра çапла каланă: пĕчченшер бомбардировщиксем Англин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи аэродромсем, фабрикăсемпе заводсем, складсемпе чугунсул линийĕсем çине пырса тапăннă. Англи авиацийĕн февралĕн 2-мĕшĕнче виçĕ самолет пĕтнĕ.

Англин темиçе бомбардировщикĕсем, тесе каланă Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере, 100 истребительпе пĕрле, февралĕн 1-мĕшпе 2-мĕшĕнче Çурçĕр Францире Германия оккупациленĕ портсем çине çĕнĕрен пырса тапăннă.

Февралĕн 3-мĕш. (ТАСС).

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Германи çарĕн верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер Германин уйрăм самолечĕсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англири аэродромсем çине, фабрикăсемпе заводсен сооруженийĕсем çине, складсемпе чугунçул линийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Пĕр аэродромра противник самолечĕсене тата пĕр ангара сиен кӳнĕ.

Саутэндран кăнтăр енче бомба тивнипе противник пароходне вут хыпса илнĕ. Гарвичран кăнтăр-хĕвеланăç енче противникăн тепĕр пароходне сиен кӳнĕ. Противникăн виçĕ самолет пĕтнĕ.

Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 2-мĕшĕнче Англин темиçе самолечĕ Çурçĕр Францире Германи аэродромĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă, анчах нимĕнле сиен те кӳреймен. Булоньре темиçе çурта çĕмĕрнĕ тата 7 çынна вĕлернĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Англире çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Германи авиацийĕн активлăхĕ пысăках пулман. Пĕрерĕн вĕçсе пынă самолетсем Хĕвелтухăç Англири темиçе пункт çине бомбăсем пăрахнă. Сиенсем пысăках мар. Вилнисемпе аманнисем çук.

Ыран февралĕн 3-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Англи çине вĕçсе пыман.

Англи бомбардировщикĕсем ĕнер Çурçĕр Францире противник оккупациленĕ портсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи бомбардировщикĕсене 100 истребитель хӳтлесе пынă. Булонь çыранĕнче якорь ярса тăнă суднăсем çине нумай бомбăсем пăрахнă. Англи самолечĕсене хирĕç зенитнăй артиллери вăйлăн персе тăнă. Сывлăшри çапăçура Германин виçĕ самолетне персе антарнă. Çавăн пекех Остенде районĕнче те Германи аэродромĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Либерал Мандер Англин мир тумалли условийĕсем çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Англи парламенчĕн членĕ либерал Мандер общинăсен палатине резолюци проекчĕ тăратнă. Резолюци проектĕнче çапла каланă: Англин мирлĕ условийĕсем çинчен анлă пропаганда туса пыни Англине çĕнтерӳ тума чылаях çăмăллатнă пулĕччĕ. Мандер мир тумалли çав условисене каласа панă. Вĕсенче акă мĕн каланă: хальхи вăхăтра национал-социалистсемпе фашистсене пăхăнса тăракан пур халăхсене те çĕнĕрен ирĕклĕх памалла, Германипе Итали халăхĕсене хăйсем кăмăллană пек формăллă управлени туса хума май памалла, Германипе Италин хальхи вăхăтри правительствисемпе нимĕнле каласу та ирттермелле мар. Малалла условисенче тĕнчери организаци туса хума палăртнă, вăл организацин агрессиллĕ ĕçсене малалла сарăлса кайма чарса лартма çителĕклĕ таран хĕçпăшаллă вăйсем пулмалла, вăл тĕнчери тавлашусене мирлĕ йĕркепе татса пама тата мĕнпур халăхсен интересĕсене шута илсе, тĕнчери экономикăна çĕнĕлле йĕркелесе яма çителĕклĕ авторитетлă пулмалла.

Англи авиацийĕ Сардини çине тапăннă

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англин тинĕс-çар авиаци самолечĕсем ĕнер Сардинири тĕп силовой станцисенчен пĕрин çине пырса тапăннă. Англин пĕр самолечĕ каялла тавăрăнман.

Таи тата Франци Индо-Китайĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Таипе Индо-Китай хушшинче ситес вăхăтра пуçланакан каласусенче пулма Индо-Китай делегацийĕ çак эрнере Токио хулине тухса каять. Таи делегацийĕ февралĕн 5-мĕшĕнче кайма палăртнă.

Çывăх вăхăтрах Таипе Индо-Китай хушшинче телеграф, почта тăрăх çыхăну тытма, пароходсем çӳреме пуçласçĕ. Çавăн пекех перемири тунă вăхăтра тухса кайма пултаракан инцидентсене тĕрĕслеме комисси тăваççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви официальнăй вырăнсенчен илнĕ сведенисем тăрăх çапла пĕлтерет: Таи войскисем Индо-Китай войскисен малти посчĕсенчен пĕрине йышăннă, çапла тунипе перемирие пăснă.

Индо-Китай войскисем нумаях пулмасть перемири пирки тунă килĕшӳпе туса хунă нейтральнăй зонăна кĕме хăтланнă, анчах Таи войскисем вĕсене каялла хăваласа янă, тесе пĕлтереççĕ.

„Китая пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет“ Чан Кай-шине чĕнсе калани

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). «Китая пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» Чан Кай-ши патне çакăн пек телеграмма янă: «Таваттăмĕш çарпа пулса иртнĕ конфликт пире пысăк шухăша ячĕ. Китай халăхĕн пĕрлĕхĕ яланах эсир ертсе пынипе тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳ бази пулнă. Шалти хирĕçӳсемпе Япони пропаганди, çавăн пекех Япони майлă тăракан пĕтĕм тĕнчери элементсем усă курасçĕ, вăл хирĕçӳсем Китай ĕçне сиен кӳмесĕр тăма пултараймаççĕ. Комитет тăваттăмĕш çар сине тивĕçлипе пăхмăз, конфликта мирлĕ йĕркепе татса пама, тухса тăнă йывăрлăхсене пĕтерме, тĕрлĕ группăсем хушшинчи туслăха çĕнĕрен йĕркелесе яма ыйтать».

Совет Союзĕпе Япони хушшинче пулă тытасси çинчен тăракан ыйту тăрăх пыракан калаçусем тавра

СССР правительствипе Япони правительстви хушшинче пулă тытма çĕнĕ конвенци туса хатĕрлеме Совет Союзĕпе Япони комиссине организацилесси çинчен кăçалхи январĕн 20-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пулă тытас ыйту тăрăх каласусем ирттерме делегаци уйăрнă. Делегаци составĕнче: Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ (председатель), Наркоминделăн иккĕмĕш Инçет-Хĕвелтухăç отделĕн заведующийĕ С. К. Царапкин юлташ (председатель заместителĕ), Наркоминделăн правовой отделĕн заведующийĕ А. П. Павлов юлташ, Наркомвнешторгăн хĕвелтухăç управленийĕн начальникĕ П. Н. Кумыкин юлташ, СССР Наркомфинĕн валюта отделĕн начальникĕ И. Д. Злобин юлташ. Совет делегацийĕн ответлă секретарьне Г. И. Павлычев юлташа лартнă.

* * *

Япони посольствин Наркоминдела çапла пĕлтернĕ: Япони правительстви пулă тытас ыйту тăрăх каласусем ирттерме делегаци уйăрнă. Делегаци составĕнче: посланник Ниси Харухико (председатель), Японин Мускаври посольствин советникĕ Миякава Фунао (председатель заместителĕ), çав посольствăннах пĕрремĕш секретарĕ Сайто Киуро (эксперт), çав посольствăннах виççĕмĕш секретарĕ Хироока Тамоцу (эксперт), дипломатиллĕ атташе Манива Хидебуми (эксперт). (ТАСС).

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: «Февралĕн 1-мĕшĕнче ирхине пиррĕннисем Агордата (Эритрея) илнĕ. Нумай çыпсене тыткăна илнĕ, орудисем тата авто-мототранспорт туртса илнĕ. Итальянецсене 11 танк тата 15 оруди пĕтерсе тăкнă. Противникăн пысăк çухатусем пулнă.

Абиссинири фронтра Англи войскисем Метемма районĕнче противника хĕссех пыраççĕ. Противник Гондара каякан çул тăрăх каялла чакать. Итали Сомалийĕнче Англин патруль чăсĕсем пĕтĕм чикĕ тăршшĕпех противник посчĕсене сире-сире пыраççĕ».

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем, Агордата илнĕ хыççăн, Керена районĕнче (Агордатран çурçĕр-хĕвелтухăç енче) итальянецсене хĕссе пыраççĕ. Агордатра итальянецсен чылай пысăк гарнизонах пулнă, анчах унăн пĕр пайĕ тухса тарнă пулмалла; тыткăна темиçе çĕр çынна кăна илнĕ.

Эритрейăра итальянецсен Баренту зонинче (Эритрея) ĕнер хаяр çапăçусем пынă.

Противник самолечĕсем Сардиния çине пырса тапăннă, Гирса ятлă юханшыв плотини çине бомбăсем пăрахнă. Сиен пулман. Противникăнне пĕр самолет персе антарнă, иккĕмĕш самолет Впаретжо сывăхне (Центральнăй Италия) ӳкнĕ. Самолетсем çинчи летчиксене тыткăна илнĕ.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греции фронтра Итали самолечĕсем противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем çине бомбăсем пăрахнă.

Çурçĕр Африкăра Англин мотомеханизированнăй колоннисем çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра Агордатпа Баренту зонинче (Эритрея) ĕнер хаяр çапăçусем пынă.

Противник самолечĕсем Сардиния çине пырса тапăннă, Гирса ятлă юханшыв плотини çине бомбăсем пăрахнă. Сиен пулман. Противникăнне пĕр самолет персе антарнă, иккĕмĕш самолет Впаретжо сывăхне (Центральнăй Италия) ӳкнĕ. Самолетсем çинчи летчиксене тыткăна илнĕ.

Иоганнесбургри событисем

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: январĕн 31-мĕшĕнче Иоганнесбургра (Кăнтăр-Африка Союзĕн пысăк хули) пысăк йĕркесĕрлĕх пуçланнă. Каçхине хулара Британие хирĕçле националистла «Оссева Брандваг» партийĕн членĕсем пуху туса ирттернĕ. Пуху хыççăн урамсенче тытăçусем пуçланнă, çав тытăçусенче «Оссева Брандваг» партийĕн членĕсем, салтаксем тата граждăнла халăх пулнă. Февралĕн 1-мĕшĕнче каçхине йĕркесĕрлĕх çĕнĕрен пуçланса кайнă. Полици куççулĕ кăларакан газсемпе чукмарсене ĕçе янă. Иоганнесбурга ытти хуласенчен полицейскисем, çавăн пекех çар чăсĕсем чĕнсе пынă. Йĕркесĕрлĕх вăхăтĕнче нумай магазинсен чӳречисене çĕмĕрсе тухнă. Салтаксем «Трансваалер» хаçатăн суртне пырса кĕме хăтланнă, çав çуртра «Оссева Брандваг» партийĕн ертсе пыракан центрĕ вырнаçса тăрать. Ĕнер ирхине хулара лăпкă пулнă, анчах та урамсем тăрăх бронеавтомобильсем çӳренĕ. «Трансваалер» хаçатпа Герцог органĕ — «Вандерленд» хаçат çурчĕ патĕнче темиçе çĕр çын пухăннă. Çуртсене сиен кӳнĕ. Халиччен аманнă çынсене, пуринчен ытларах салтаксене, 140 çынна госпитале ăсатнă.

Иоганнесбургри событисене пула çар пурне те, вăл шута вĕсенчен протекторат граждăнĕсем шутланакансем те кĕреççĕ, нимĕçсен çар сучĕ суд тума пултарать.

Германин протекторатри çар влаçĕсем кăларнă çĕнĕ распоряжени

ПРАГА, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Чехири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çар влаçĕсен постановленийĕ тăрăх протекторат территоринчи Германи чăсĕсенчи çар служащийĕсене

„Дейли Уоркер“ хаçата кăларма чарнине хирĕç протест тăваççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Англири чугунçул работникĕсен национальнăй тред-юнионăн исполкомĕ «Дейли Уоркер» хаçата хупнине хирĕç протест тăвакан резолюци йышăннă. Çак тред-юнионăн Манчестерти тата Полмедири (Шотландия) икĕ отделенийĕ, горняксен Кăнтăр Уэльсри федерацийĕн нумай отделенийĕсем, Ллане-ллири (Кăнтăр Уэльс) 5 пин сталелитейщиксен представителĕсем, Англири Шорт тата Хендли Пейдж авиазавочĕсенчи профуполномоченнăйсен комитечĕсем, çавăн пекех Лондонри 29 предприятири профуполномоченнăйсен тата профсоюз членĕсен пухăвĕте çавăн пек резолюцисем йышăннă.

Нью-Йоркра призыва кĕнĕ çынсен 60 проценчĕ çара илме юрăхсăр пулнă

Америкăри «Нейшн» журнал пĕлтернĕ тăрăх, Нью-Йоркри призыв комиссийĕ призыва кĕнĕ çынсен 60 процентне çар службинче пулма юрăхсăр тесе йышăннă, мĕншĕн тесен вĕсен сывлăхĕ начар пулнă. Çара илнĕ çынсен 20 проценчĕн сывлăхне çителĕксĕр тесе йышăннă. Çакна ăна çар чăсĕсенче палăртнă.

Çакă вăл акă мĕн çинчен калать: Америкăри çамрăксен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕн сывлăхĕ пачах та çителĕксĕр, çакă вăл вĕсен апат-çимĕç начар пулнинчен килет. Çакăнпа пĕрлех вăл çĕршывра халăх сывлăхне сыхласшĕн тăрăшманнине те кăтартса парать.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра. Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнче çапăçусем Синьянран çурçĕр енче пыраççĕ. Китай войскисем Японин малалла пыракан войскисене хирĕç тăраççĕ.

Çурçĕр Китайра. Суйюань провинцинче Япони отрячĕ, 11 самолет пулăшнипе, январĕн 24-мĕшĕнче пуканелле чăссен войскисемпе пĕрле Сарачи районĕнче Хуанхе юханшывĕ урлă каçнă. Çав юханшывăн кăнтăр пайĕнче çапăçусем анлăн пыраççĕ.

Февралĕн 3-мĕш. (ТАСС).

Шупашкар хулинчи партактивăн пухăвĕ

Февралĕн 3-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи партактивăн пухăвĕ пулса иртрĕ. Актив пухăвĕ пĕр ыйту — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн черетлĕ V-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен сӳтсе-явăрĕ. Ку ыйтупа ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Андреев юлташ доклад туса пачĕ.

Андреев юлташăн доклачĕ тăрăх пренире Любимов (Ялхуçалăх институчĕ), Митьков (Уполнаркомзаг), Трофимов (ВКП(б) горкомĕ), Андреев (Ялхуçалăх институчĕ), Михайлов (Пединститут) юлташсем тата ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ тухса каларĕç.

Докладчик тата пренире тухса каланă юлташсем ВКП(б) Обкомĕн черетлĕ V-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеме чĕнчĕç.

Актив пухăвĕ: ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри тата уйрăмах пропагандăпа агитаци ĕçĕнчи çитменлĕхсем — ВКП(б) Обкомĕн V-мĕш пленумĕ палăртнă çитменлĕхсем — Шупашкар хулинчи парторганизацисенче те пур, тесе каларĕ. Партипе хуçалăх ĕçĕнчи, комсомол тата совет ĕçĕнчи ертсе пыракан кадрсен чылай пысăк пайĕ хăйĕн теориллĕ-политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлени çук-ха. ВКП(б) уставĕ коммунистсене кăйсен идейăллă-теориллĕ çӳллĕшне ӳстерсех пыма хушать, анчах устав хушнине коммунистсем мĕнле пурнăçа кĕртнине нумай пуçламĕш парторганизацисенче япăх контроллесе тăраççĕ. Парти историне вĕренекенсен кружокĕсен ĕçĕ çине пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем пит те сахал çавăрăнса пăхаççĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕç те хулара çителĕксĕр пулса ,пырать-ха.

Актив пухăвĕ ВКП(б) Обкомĕн V-мĕш черетлĕ пленумĕн решенийĕсене ырларĕ тата вĕсене пурнăçа кĕртсе пыма йышăнчĕ. Пуху ВКП(б) горкомĕпе горисполкома хулари колхозсемпе совхозсенче (хулана 4 колхоз тата 2 совхоз кĕреççĕ) çуракине вăхăтра хатĕрленсе çитмелле тума тата пуçламĕш парторганизацисене (Ялхуçалăх институчĕпе колхоз техникумĕ, Наркомзем т. ыт. те) колхозсемпе совхозсене агротехникăллă ĕçсене пурнăçа кĕртес çĕрте пулăшма хушрĕ. Хула çывăхĕнчи колхозсемпе совхозсенче парниксемпе теплица хуçалăхне ӳстерес тĕлĕшпе те ĕçлесе пымалла.

Актив пухăвĕ ВКП(б) горкомĕпе партбюро тата пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене парти уставĕ идейăллă-политикăллă пĕлӳсене ӳстерсе пыма хушнине ВКП(б) членĕсемпе кандидачĕсем мĕнле пурнăçа кĕртнине контроллессине, çавăн пекех кадрсен вĕренӳне ертсе пырассине вăйлатма хушрĕ. Предприятисемпе учрежденисенче тата, февралĕн 16-мĕшĕнче уйрăм суйлав округĕсенче пулас суйлавсене хатĕрленнĕ май, суйлав участокĕсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе халех анлăн сарса ярас пулать.

Уйрăм суйлав округĕсенчен СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне тата вырăнти Советсене депутатсем суйламалли кун—февралĕн 16-мĕш—çитесси вунă кун кăна юлчĕ. Çапах та суйлав участокĕсенче суйлавçăсене Сталинла Конституцине суйлав законĕ çинчен, партипе правительство йышăннă решенисем çинчен, çавăн пекех депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен ăнлантарса парасси кирлĕ таран сарăлманха. Суйлавçăсем хушшинче пухусемпе митингсем тунипех чăрăнса тăмалла мар, агитаторсен кашни суйлавçă патне çитсе, ăна суйлав законĕ çинчен, депутата суйламалли кандидат çинчен тата ытти ыйтусем тăрăх та ăнлантарса памалла.

Улатăрти учительсен институтĕнче

Улатăрти учительсен институтĕнче хĕллехи экзаменсемпе зачетсем пулса иртрĕç. Пĕтĕмĕпе илсен, студентсем испытанисене ытти çулхисенчен лайăхрах хатĕрленни палăрать. Отлично вĕренекен 47 студент стипенди илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Анчах, калас пулать, чылай студентсем япăх вĕренни те палăрчĕ. Сăмахран, физикăпа математика факультетĕнче 1-мĕш «а» курсра виçĕ предметпа е ытларах начар палла илнисен хисепĕ 7 çын. Чăваш чĕлхипе литература уйрăмĕн 1-мĕш класĕнче литература теорийĕпе 14 студентран 9 çын испытани парайман, 3 студент кăна испытанисене йĕркеллĕ тытнă. Ку, пĕр енчен, кĕркунне института начар палăсемпе илнинчен те килнĕ.

Чăваш чĕлхипе литература уйрăмне пушшех те начар пĕлекенсенех илнĕ. Институт директорĕ ытти факультетсене испытани тытайманнисене чăваш уйрăмне ярать. «Унта пурте юрать»,—теççĕ пулас. Çапла туни чăваш уйрăмĕн авторитетне те, унти вĕренӳ пахалăхне те нумай чакарать. Чăваш уйрăмне вĕренме кĕнисенчен хăш-пĕрисем чăваш чĕлхине япăх пĕлеççĕ. Хăшĕ института киличчен чăваш чĕлхине ниçта та вĕренмен. Çавăн пирки те хĕллехи испытанире чăваш чĕлхипе 1-мĕш курсра «отлично» палла пĕр студент кăна илме тивĕçлĕ пулнă.

Çитменне, чăваш чĕлхи çине директори те, студентсем хăйсем те çителĕксĕр пăхаççĕ. 1-мĕш курсра чăваш чĕлхипе хатĕрленме дирекци пĕр кун кăна панă. Студенчĕсем те, чăваш чĕлхине пĕлетпĕр-ха тесе, лайăх хатĕрленме шутламан.

Икĕ курсра тата чăваш чĕлхипе литература экзаменне дирекци пĕр кунта, пĕрле пĕр билетпа ирттермелле тунă. Çитменне, пур испытанисем хыççăн, чи юлашкинчен ирттерме палăртнă. Отметкине те пĕрле лартма йышăннă (чĕлхепе литературине уйрăмăсăр). Çав вăхăтрах, чăваш чĕлхипе литературине чăваш уйрăмĕн тĕп предмет шутланать, тата вăл икĕ предмета икĕ преподаватель вĕрентнĕ. Расписанине те преподавательсемпе килĕшсе туман. Çавăн пирки те чăваш литературипе испытанине, преподавателĕ пур çĕртенех, урăх преподаватель ирттернĕ. Ку ĕнтĕ дирекци «руководствине» аван кăтартса парать.

Испытанире тата çакăн пек çитменлĕх пур. Пĕр-пĕр ыйтупа студент хăйĕн билечĕ тăрăх ответ хатĕрлет пулсан, преподаватель çав ыйтăвах тепринчен ыйтать. Паллах, хатĕрленекен студент вăл ыйтăва тепĕр студент отвечĕ тăрăх ăнланма пултарать. Билетсенче те çитменлĕхсем пур. Чăваш чĕлхипе билетри ыйтусем вăтам шкул программинчен пĕртте уйрăм мар. Çитменне, предложени примерĕсем йывăр. «Нарспирен» пĕр пример та илсе паман. Правилăсене ăнлантарнă чухне студентсем литературăри е пурнăçран илнĕ примерсемпе усă курмаççĕ, преподаватель лекцире каланă примерсемпех усă курасçĕ. Вĕсем те пулин ячĕшĕн кăна тунă примерсем.

Пĕр-ик сăмах институт çинчен. Институт çĕнтĕ иккĕмĕш çул ĕçлет. Апла пулин те, преподавательсенчен ученăй звани илни пĕр çын та çук. Нумайăшĕ педучилищесенчен пынă.

Институт директорĕ Григорьев юлташ учительсен пурнăçĕпе интересленмест. Вăл хăйĕн вырăнне урăх преподавателе лекци вулаттарни те пулнă. Вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Марков юлташ лекцисене итлеме сахал çӳрет.

Институт ĕçĕсене чăннипех лайăхлатса яма, асăннă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерни кирлĕ.

Ф. МЕЦЕНАТОВ.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени кирлĕ

Пирĕн республика хутпĕлменлĕхе пĕтересситĕн Мордва республикипе социализмлă ăмăртăва тухрĕ. Ăмăрту договорĕ тăрăх хутла пĕлменнисене тата хутла сахал пĕлекенсене 1941 çулти июнĕн 1-мĕшне вĕрентсе кăлармалла. Чылай районсенче хутпĕлменлĕхе тĕп-пипех пĕтерме палăртнă. Çак задачăна пурнăçлассишĕн партипе комсомол, профсоюз тата ытти общественăллă организацисен çине тăрса ĕçлемелле. Анчах хăшпĕр районсем ку ĕçе хаклламаççĕ, çак тарана çитсе те хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăнман. Çавăн пекех вăсене шута та илмен.

Сăмахран, Вăрмар районĕнче кăçал хутпĕлменлĕхе йăлтах пĕтерме палăртнă. Çак задачăна пурнăçласси пит те пысăк тата ответлă ĕç пулса тăрать. Апла пулин те, ку районра тивĕçлипех ĕçлеме тытăнманха.

Вăрмарта хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕç пĕтĕмпех хăй тĕллĕн пулса пырать. Райçутĕç пайĕн ку ĕçре уйрăмăнах вирлĕ ĕçлемелле. Кунта ĕçлекенсем хăйсен ĕçĕшĕн ответлă мар. Çакăн пирки районра çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен çын çук. Вĕсем çитĕннисене вĕрентессине технически ĕç пек пăхаççĕ, инспектор обязанноçĕсене счетовод çине хунă.

Ĕç çине çакăн пек сӳрĕккĕн пăхни пысăк чăрмав кӳрет. Шăхаль, Чулкас, Кив Вĕренер тата Аслă Пинер ялсовечĕсенче хутла пĕлменнисене тата сахал пĕлекенсене вĕрентме тытăнман. Çитĕннисене вĕрентме уçнă шкулсем начар ĕçлеççĕ. Вĕренӳ пахалăхĕ япăх. Вĕренекенсем шкула йĕркеллĕ çӳремеççĕ.

Йĕпреç районĕнче те хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Йĕпреç поселокĕнче çитĕннисене вĕрентесси уйрăмăнах начар пырать. Унта хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене хисепе илсе çитермен. Хутла пĕлменнисем йышăнăнах çитĕнсе çӳренĕ. Пухăвсем çитĕнсе çӳренĕ. Пухăвсем çитĕнсе çӳренĕ. Пухăвсем çитĕнсе çӳренĕ.

Лекци

Февралĕн 6-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче ВКП(б) историйĕ çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли **«Ленинăн «Что делать?» ятлă кĕнеки. Марксистла партин идеологиллĕ никĕсĕсем»** темăпа тӳлевлĕ лекци пулать. Лектор — **Д. Ф. Андреев** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОЙ КОНТОРЕ „СПОТАРА“
ТРЕБУЮТСЯ
УЧЕНИКИ
ПО БОНДАРНОМУ ПРОИЗВОДСТВУ.
Справиться: гор. Чебоксары, Красноармейская, дом № 5, контора „Спотара“, телефон № 3—96. „Спотара“.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. **Телефонсем:** редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2212

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 145. Ф. Б. 58×84 п. л.